Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ЙАНВАР 10 ТУНТИКУН

8 (4821)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухаť ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Промышленнăç йулса пырассине йаланлăхах пĕтерер

Пирĕн промышленнăçра ĕçтухăçлăхне ӳстерессишĕн, пахаа продукци туса кăларассишĕн кĕрешекен çулăмлă патриотсем пиншерĕн шутланаççĕ. Куславкка комбинатĕнчи маçтăр-стахановкă—ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕ Йевдокийа Цыганова йулташăн, Çĕмĕрлери „Большевик" заводри пĕр диффузортан 340 килограм тонкидă кăларса, рекордлă ӳсĕм тунă диффузо шчик Жестковăн, Вăрнарти фосфорит заводĕнчи бригадир Крышковăн тата ытти нумай стахановецсемпе ударниксен, пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлекен рабочисен, инженерсен, техниксен ĕçĕсем—пĕтĕм Совет çĕршывĕнчи паттăр халăхăн пысăк пултарулăхĕпе активлăхĕн вăйне кăтартакан пахалăхсем пулаççĕ.

Стахановецсемпе ударниксен пĕрмай ӳссе пыракан çарĕ, хăйĕн ретне куллен çĕнĕ çĕр рабочисене, инженерсене, техниксене йавăçтараť. ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн февралĕти пленумĕнче Сталин йулташ доклад тунă хыççăн, мĕлйуншар рабочисемпе инженерла техникла работниксем, фашиссен агенчĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалă националиссене, сăтăрçăсене çапса аркатса, вĕсен йулашкийĕсене хăвăрттăн пĕтерме çĕкленчĕç. ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă тапхăрта пĕтĕм совет халăхĕ коммунистсен партийĕ тата Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе, çĕршывăн пуйанлăхне ӳстерессишĕн, унăн тĕрекне хăватлатассишĕн нихăçан пулман политикăлă тата производствăлă активлăхпа кĕрешрĕç.

Çаксем пурте промышленнăç ĕçне çĕклеме паха та татăклă условисем туса параççĕ. Пирĕн республикри предприйатисенчен нумайĕшĕсем çав условисемпе усă курса, 1937 çулта пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Чылай предприйатисем социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнă уйава çулталăк планне тултарнипе кĕтсе илчĕç. ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ тĕлне весен хисепĕ татах та ӳсрĕ. Плана срукчен тултаракан заводсен ĕретне Çĕмĕрлери „Большевик", Вăрнарти фосфорит, Шупашкарти тир-сăран, спирт завочĕсем тата чылай предприйатисем тăчĕç.

Çав вăхăтрах чылай предприйатисем начар ĕçлерĕç. Кирпĕч завочĕсем планпа кăларма пăхнă продукцирен 97 процентне çеç панă. Долгополйанăри хими завочĕ çулталăк планне 67 процент çеç тултарнă. Апат-çимĕç, вырăнти промышленнăç предприйатисем, Канашри вагонсем йусакан завод та çителĕксĕр ĕçленĕ. Кунашкал начар ĕçлени—пĕтĕм производствă ĕçне политикла задачăсемпе çыхăнтарса организацилеме пĕлменнин тата руководствă ĕçне большевисăмла вĕренсе пынă никĕс çинче туса пыманнин результачĕ.

Фактсем те çавăн çинченех калаççĕ. Долгополйанăри хими заводĕнче стахановецсене çухатса пĕтернĕ; завод инженерĕ Маркович йанварпе феврал уйăхĕсенче шăнна осмол панипе производствăна пысăк чăрмав кӳнĕ. Унăн айĕпĕпе нойабĕр уйăхĕнче завод 10 пин тенкĕ убытка курнă. Кун çинчен завод директорĕ лайăх пĕлнĕ. Анчах вăл Маркович сăтăрла ĕç тунине тавçăрса илеймен. Партипе профсойуз организацисем те ун çине вăхăтра çавăрăнса пăхман.

Çĕмĕрле комбиначĕн руководствине хĕсĕнсе кĕнĕ сăтăрçăсем (Крутобережский, Воронов) комбинатăн ĕçне пур чухне те пысăк чăрмав кӳрсе пынă. Тĕрлĕ майсемпе стахановецсен йухăмне пусарса пынă, çирĕп дисциплинăна аркатасшăн тăрăшнă. Сигналсем нумай пулнă пулсан та, комбинат руководителĕсен тимсĕрлĕхне, йăвашчунлăхне пула, вĕсем комбинатрах йулнă.

Чăвашвăрманпром организацисенче пулнă халăх тăшманĕсем, сăтăрçăсем те предприйатисен ĕçне пысăк чăрмав кӳнĕ. Чăвашвăрманпромăн çĕнĕ руководстви сăтăрçăсен йулашкисене пĕтерессишĕн халĕ те тивĕçлĕ кĕрешӳ пуçарман-ха.

1937 çулхи итогсем техникăна алла çавăрса илессишĕн, сăтăрçăсен тĕпренчĕкĕсемпе йулашкисене пĕтĕмпех пĕтерессишĕн тимлĕн кĕрешме кирли çинчен калаççĕ. Çавăн пек тума ыйтаť промышленнăçăн 1938 çулти программи те.

Промышленнăçăн 1938 çулти ĕçĕсен программинче Ленин—Сталин партийĕпе правителствă ĕççыннисен пурнăçне пĕрмайах ӳстерсе пырассишĕн тăрăшни, халăх куллен кирлĕ таварсем ыйтнине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртни, çĕршывăн оборонă тĕрекне хăватлатассишĕн тăрăшни уççăнах курăнса тăраť. Рабочисен ĕç укçийĕ иртнĕ çулхипе танлаштарсан 10 процент таран ӳсет. Промышленнăçăн кăçал иртнĕ çулхинчен 15,3 процент ытларах продукци туса кăлармала. Çăмăл, апат-çимĕç промышленнăçĕсен продукци хисепĕ те нумай ӳсет.

„Пайан социалисăм çĕршывпе капиталисăмла çĕршывсем хушшинчи тĕп ăмăрту хуçалăх йенĕпе пыраť. Çак ăмăртури кĕрешӳн тĕп виçи—ĕç тухăçлăхĕ пулаť" (Молотов). 1938 çулта уйрăм халăх комиссариачĕсем тăрăх ĕçтухăçлăхне 11—14,4 процент ӳстермеле, продукци хакне 1,9—5,4 процент чакармала. Пирĕн республик умĕнче те çак задачăсемех тăраççĕ.

Çак вăхăтрах, ССР Союзĕн чикĕ лешйенче, капиталиссем пуçпулса тăнă çĕрте ĕç тухăçлăхĕ чакса, таварсен хакĕ ӳссе пыраť. Унта ĕççĕр тăрса йулнă мĕлйуншар рабочисем чăтма çук йăвăр условисенче пурăнаççĕ.

Чăваш республик промышленнăçĕ умĕнче 1938 çулта продукци кăларас хисепе ӳстерес, ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукци хакне йӳнетес йенĕпе тăракан задачăсене пурнăça кĕртнипе пĕрлех, çĕнĕ строителствăсем йенĕпе те пысăк задачăсем тăраççĕ. 1938 çулта Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунçула хута йамала, Улатăрти гармоньсем тăвакан, Тракри кирпĕчпе черепицă тăвакан, Промсойузăн кантăк заводне, Буинскинчи сланц кăларакан руднике тата ытти заводсене туса, çитерсе, ĕçе кĕртмеле.

1938 çулхи задачăсем пысăк тимлĕхпе ĕçлеме ыйтаççĕ. Пирĕн вăл пысăк та ответлă задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртме кирлĕ условисемпе майсем çителĕклĕ. ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавĕсем вăхăтĕнче пĕтĕм çĕршывĕпе саралнă стахановла йухăм çакна уççăнах кăтартса параť.

Хуçалăх организацисен руководителĕсен, халăх комиссариачĕсенчен пуçласа предприйати, цех патне çити, пĕтĕм производствă ĕçне массăпа таччăн çыхăнса тăнă, массăсен политикăпа производствă хастарлăхне çĕклесех пынă никĕс çинче организацилемеле. Предприйатисем умĕнче халĕ техникăна алла илес, предприйатин пĕтĕм пултарулăхĕпе туллин усă курас ыйту çивĕччĕн тăраť. Кăна техникăна вĕренес ĕçе лайăх организацилене тăрăх, стахановла йухăма вăйлатса пырса пурнăça кĕртмеле. Техникăна алла çавăрса илмен рабочи нормăна тултарма, стахановец пулма пултараймасť.

Предприйати руководителĕсен, предприйатисенчи партипе профсойуз организацисен çакна ăнланса илес пулаť: кашни вунăкунлăхра, кашни уйăхра, кашни кварталта государствă планне тултаракан, ССР Союзĕ чиккисен лешйенчи çавăн пек заводсенчен лайăхрах продукци, сахал мар, нумайрах продукци паракан завод çеç социалисăмла ĕçлет.

Йалсовечĕсен ревизи комиççийĕсен ĕçĕсем çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă постановлени

Йалсовечĕсен ревизи комиççийĕсен ĕçĕсем çинчен Елĕк тата Кувакинă райĕçтăвкомĕсен председателĕсен, Елĕк районĕнчи Чăвашсурăм, Йаргуньково йалсовечĕсен тата Кувакина районĕнчи Злобински, Миренски йалсовечĕсен председателĕсен тата Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн доклачĕсене итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ нумай йалсовечĕсен ревизи комиççийĕсем хăйсен обйазăннăçне пурнăçа кĕртменнине, йалсовечĕсен кассисене кашни уйăхрах тĕрĕслессине тата йалсовечĕсен бӳджечĕсене кашни кварталтах ревизи туса пырассине пурнăçа кĕртменнине палăртаť.

Елĕк районĕнчи Чăвашсурăм йалĕнчи ревизи комиççи 1937 çулта хай тĕллĕн йалсоветне икĕ хут кăна ревизи тунă тата тепĕр ревизи райĕçтăвкомăн специнспекторĕпе пĕрле туса иртернĕ.

Йаргуньковă йалĕнчи ревизи комиççи документсем тăрăх кварталсенче тĕрĕслессине туса иртернĕ, анчах йалсовечĕн кассине пĕр уйăхра та тĕрĕслемен.

Ревизи комиççисем хăйсен решенийĕсене пурнăça кĕртессипе пачах интересленмеççĕ, йалсовечĕсене те вăл решенисене пурнăçлама кăтартса пымаççĕ (Елĕк районĕнчи Йаргуньковă йалсовечĕн тата Кувакинă районĕнчи Миренски йалсовечĕн ревизи комиççийĕсем).

Чылай районсенче йалти ревизи комиççисем пайтахăше пачах ĕçлемеççĕ, финанспа бӳджет дисциплинине пăснипе кĕрешни çук.

Ĕç çакăн пек тăни йалти ревизи комиççисен, бӳджет инспекторĕсен тата райфинанс пайĕсен специнспекторĕсен ĕçне райĕçтăвкомсем, райфинанс пайĕсем тата Финанс Халăх Комиссариачĕ йенчен йертсе пыни çителĕксĕр пулнă пирки, йалсовечĕсен тата ревизи комиççисен ĕçне кирлĕ пек контроллесе пыман пирки кăна пулма пултарнă. Ревизи комиççисем ĕççыннисем умĕнче отчот тăвассине райĕçтăвкомсем организацилемен.

Çавăн пекех районри пичет те йалти ревизи комиççисен ĕçне çутатса пымасť, вĕсен ĕçне общественнăç умне сӳтсе-йавма кăларса тăратмасť.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнаť:

1. Райĕçтăвкомсене тата Финанс Халăх Комиссариатне йалсовечĕсене ревизи тăвас ĕçе татăклăнах лайăхлатма, кашни кварталтах ревизи комиççисене пухса обйазателнă йĕркепе инструктивлă канашлусем иртерсе, çавăн пекех тата ревизи комиççисен активне вăхăтра пăхса тухса, йалти ревизи комиççисене йаланах йĕр се пыма хушас.

2. Райĕçтăвкомсене çакна тума хушас.

а) йалти ревизи комиççисен пурин те 1938 çулти йанварĕн 15-мĕшĕнчен 1937 çулхи йал бӳджечĕсене тата йал бӳджечĕ çинче тăракан пур учреждениçене те документсем тăрăх тĕрĕслессине туса иртермеле.

б) йанвар уйăхĕнче райĕçтăвкомсен президиумĕсен ларăвĕсенче 1937 çулхи йал бӳджечĕсене пурнăçлани çинчен докладсем итлемеле.

3. Çапла тăвас: ревизи комиççи кашни актне райфинанс пайĕн пырса кĕнĕ кунран пуçласа 10 кун хушшинче пăхса тухмала, çав срукрах райфинанс пайĕн акт тăрăх кирлĕ пек кăтартусем памала тата тивĕçлĕ мерасем йышăнмала.

4. Пур райĕçтăвкомсен председателĕсене те 1938 çулти февралĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, ревизи комиççисен составнĕ кашнине уйрăммăн тĕрĕслессине иртерме тата ревизи комиççисен шанчăксăр членĕсем çинчен суйлавçăсен умне сӳтсе-йавма ыйту лартма хушас.

5 Районсенчи пур учрежденисемпе организацисенче те финанспа контроль постисене организацилемеле тата вĕсене ĕçре йаланах оперативлă йертсе пырассине йĕркелемеле.

6. Чăваш АССР Прокурорне финанспа бӳджет дисциплинине пăсакансем, растратăсем тата вăрлакансем çинчен килнĕ ĕçсене хăвăрт пăхса тухмала тăвас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

7. Елĕк райĕçтăвкомне Йаргуньковă йалсоветĕнчи суйлавçăсем умне йалсовечĕн ревизи комиççийĕ хăйĕн çине хунă ĕçе малалла туса пыма пултарасси çинчен сӳтсе-йавас ыйтуна лартма хушас.

8. Ревизи комиççисен хăйсен ĕçне йалсовечĕсен финанс секцийĕсемпе таччăн çыхăнса туса пымала, вĕсен урлă ревизи ĕçне туса пыма общественнăçа йавăçтармала.

9. Финанс Халăх Комиссарне И. З. Захаров йулташа çак постановленийе пурнăça кĕртнине тĕрĕслессине туса иртерме тата результатсем çинчен Тĕпĕçтăвком президиумĕн 1938 çулти апрелĕн 15-мĕшĕнчи ларăвĕнче пĕлтерме хушас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ
З. Андрейева.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ
Т. Василйев.

Шупашкар хули, 1937 çулти декабрĕн 25 мĕшĕ.

1938 çулхи йанварĕн 10-мĕшĕнче ССРС Аслă Совечĕн Союз Совет депутатчĕ писател Алексей Николаевич Толстой çуралнăранпа 55 çул тулчĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. Н. Толстой (1933 çулта тунă ӳкерчĕк).

М. Озерски фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕсем Мускава çеççине пыни

Йанварĕн 8-мĕшĕнче ирхине ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком çурчĕнче Мускава, Аслă Советăн пĕрремĕш çессине пынă ССР Союзĕн Аслă Совет депутачĕсене регистрацилеме пуçланă.

Йанварĕн 8-мĕшĕнче кункаçах Алтай крайĕнчен, Воронеж, Иркутск. Кировск, Курск, Омск, Орел, Сталинград, Челябинск облаçĕсенчен, Грузи, Узбек, Таджик, Казах, Киркиз СС Республикĕсенчен, Калмык, Тутар, Чăваш АСС Республикĕсенчен пынă Союз Совечĕн депутачĕсене, çавнашкалах тата Мускаври депутатсене регистрациленĕ.

РСФС Республикисĕнчен, Армйан, Казах, Таджик тата Туркмен СС Республикĕсенчен, Горно-Бадахшан автономлă облаçĕнчен, Башкир, Дагестан, Калмык, Карел, Крым, Мордва, Çурçĕр-Осетин тата Тутар АСС Республикĕсенчен пынă Националнăçсен Совечĕн депутачĕсене регистрациленĕ.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтăн Теруел участкинчи фашисла çарсем патне татти-сыпписĕр çĕнĕ чаçсем йарса çирĕплетсе тăраççĕ, вĕсем халь те республикă позицийĕсене хайаррăн атакăлаççĕ. Республиканецсем фашисла атакăсене, тăшмана пысăк çухатусем тутарса, ăнăçлăн сирсе пăрахаççĕ.

Теруелрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерех, Мусла де Теруел йалĕн районĕнче, республикă çарĕсем наступленийе куçса сăртлă çӳлĕ вырăнсене темиçе те çапăçса илнĕ. Республиканецсен йенне пăлхавçăсен 230 çынлă отрйачĕ тарса каçнă.

Теруелрен çурçĕр-хĕвелтухăçнерех, Конкуд йалĕн районĕнче, республика сапĕрĕсем пысăк паттăрлăх кăтартаççĕ. Питĕ сивĕ тата йур çăваť пулин те вĕсем сĕм çĕрлеччĕнех ĕçлесе укрепленисем тăваççĕ. Вăл укреплениссем республикă çарĕсене пăлхавçăсен атакисене сирсе пăрахма май пара ççĕ.

Йулашки сведенисем тăрăх, йанварĕн 5-мĕшĕнче республикă авиацийĕ фашиссен тăвата самолетне персе ӳкернĕ.

(ТАСС).

Испанири фашисла террор

БАРСЕЛОНА, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). Баскони правителствин советникĕ Легорре журналиссене Билбаопа Цантонийа хулисенче фашиссем 9.0 çына вĕлерме приговор йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Приговорпа вĕлермеле тунă çынсем хăйсене питĕ хăйулă тытаççĕ. Вĕсем хăйсене асаплантарса вĕлерессине революцилĕ йурă ем йурласа кĕтеççĕ.

Франко генерал укçа-тенкĕ йăвăрлăхĕнче

ЛОНДОН, йанварĕн 6-мĕш. (ТАСС). 1936 çулхи йанвар уйăхĕнче, урăхла каласан, фашисла пăлхав пуçланиччен тунă килĕшӳ тăрăх Лондонри банксем Испанине кивçен укçа панă пулнă. Çав кивçене кайала тавăрса парас шутпа Испани правителстви халхи вăхăтра Лондонри банксене иккĕмĕш взнос куçарнă. Çавăншăн „Финэншиэл таймс" тата „Финэншиэл ньюс" хаçатсем Испани правителствине мухтаса çыраççĕ.—Питех те палла,—тесе çыраť „Финэншиэл ньюс" хаçат,—Испани правителстви йутçĕршыв кредиторĕсем умĕнче хăйĕн обйазателствисене тӳрĕ кăмăлпа пурнăça кĕртсе пынă вăхăтра, Франко генерал хăйĕн укçа-тенкĕ обйазателствине йутçĕршыв умĕнче йурийех пурнăça кĕртмесĕр тăраť.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи економикăлă кризис

1937 çулăн иккĕмĕш çурçуллăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче çĕнĕ економикăлă кризисăн малтанхи паллисем сисĕнме пуçларĕç. Хаклă хутсен курсĕсем йӳнелчĕç, производствă чакма пуçларĕ, чукунçулсем тăрăх тавар тийесе турттарасси сахаллăнчĕ, ĕççĕр тăрса йулнă рабочисен хисепĕ пысăккăн ӳсрĕ. Малтанах буржуалă економиссем: производствă чакни вăл вăхăтлăха çеç, сезонлă йапала, тесе хăйсене хăйсем лăплантарчĕç. Кризис малала ӳссе пыни—çапла шутлани вăл тĕрĕс пулманнине кăтартса пачĕ. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем економикăлă питĕ пысăк йăвăрлăхсен тапхăрне кĕрсе кайрĕç.

Кризис пуринчен ытларах йăвăр промышленнăçа пырса çапрĕ. Виçĕ уйăх хушшинче (сентабĕр—октабĕр—нойабĕр) хурçă шăратса кăларас ĕç 50 процент ытла чакрĕ. Çĕршыври 230 домнă кăмакинчен декабĕр пуçланнă тĕле 113 кăмаки çеç ĕçленĕ. Хурçă шăратакан промышленнăç хай мĕн чухлĕ ĕçлеме пултарнинчен 1937 çулхи çулла 80 процент ĕçленĕ пулсан, декабĕр вĕçĕнче 15 процент кăна ĕçленĕ, ытти 85 проценчĕ ахаль тăнă.

Економикăлă кризис ĕççыннисен, пурнăçне, чи малтанах, рабочи клас пурнăçне хытă йăвăрлатаť. Ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ ӳсет, çук пурнăç, выçлăх вăйланса пыраť. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен ĕç министерстви официаллă пĕлтернисем тăрăх, рабочисен ĕçукçи октабĕр уйăхĕн варринчен пуçласа нойабĕр варрине çитиччен 11 процента йахăнах чакнă. Ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ 1937 çулăн йулашки уйăхĕсенче 2 мĕлйун çын ӳснĕ тата хальхи вăхăтра вĕсен йышĕ (тулли мар хисепсем тăрăх) вунă мĕлйун çынран та иртет.

Промышленнăçăн нумай отрăслисем, вăл шутрах автомобилсем тăвакан отрăслĕ те, ку таринччен економикăлă кризисран хытах сийен курман пулсан, хальхи вăхăтра кĕскетиĕ ĕç ерви çине куçаççĕ. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи автомобилсем туса кăларакан чи пысăк фирмăсенчен пĕри—„Дженерал моторс" октабĕр уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа 65 пин рабочине ĕçрен кăларса йанă.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи çĕнĕ кризис тĕнчере çĕнĕ економикăлă кризис пуçланнине палăртса тăраť. Хальхи кризис вăл 1929 çулхи тĕнчери економикăлă кризисăн малтанхи тапхăрĕнчи пек те мар, тата хăвăртрах, хăрушărах саралса пыраť. 1937 çулта—сентабĕртен пуçласа нойабĕре çитиччен—производствă чакни 20 процентран та иртрĕ, çав вăхăтрах, 1929 çулăн малтанхи виçĕ уйăх хушшинче производствă 15 процент чакна пулнă.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи финанс олигархийĕ кризисăн мĕн пур йăвăрлăхне рабочи класăн хулпуççийĕ çине тийесшĕн тăрăшаť. Рабочисене ĕçрен массăлăн кăларса йанипе тата ĕçукçине чакарнипе пĕрлех, общинствăла ĕçсем валли тата ĕççĕрлĕхрен пулăшнă çĕре йамали укçа-тенкĕ расхучĕсене те чакараççĕ.

* * *

Капиталисăмлă çĕршывсенчи ĕççыннисем çук пурнăçпа асапланса тертленсе пурăннă чухне, Совет Союзĕ тунă пĕтĕм тĕнче историнчи чаплă çитĕнӳсем татах та уççăнраххăн курăнса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра ĕççĕрлĕхе йаланлăхах пĕтернĕ. Советсен çĕршывĕ кризиссене пĕлмест. Сталинла Конституци Совет Союзĕнчи кашни ĕççыннине ĕçлев прави, канăç прави, вĕренӳ прави гарантилесе параť. Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ йертсе пынипе паттăр кĕрешӳре хамăр хисене валли хавасла та телейлĕ пурнăç çĕнсе илнĕ ĕççыннисен пурнăçĕ çулран çул лайăхланса пыраť.

Китайри вăрçă

Тĕп тата çурçĕр Китай фрончĕсенчи йару-тăрусем улшăнмасăрах тăраççĕ.

Тĕп фронтра, Таньцзин-Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участки районĕнче Китай çарĕсем Йапони чаçĕсене Мингуань хулинчен хăваласа кăларнă. Вăл чукунçул тăрăх йапонисем хăйсен наступленийе Нанкинран çурçĕрелле сарма хăтланаççĕ. Китай çарĕсем çавнашкалах тата вăл участкăн сылтăм флангĕнче малалла кайса Дальу йалне йышăнса илнĕ.

Çурçĕр Китайра, Хебей провинцийĕн кăнтăр йенчи пайĕнче, Китай партизанĕсем Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ çинчи Ханьдань хули патнелле çине тăрсах малалла пыраççĕ.

(ТАСС).

В. И. ЛЕНИН

Ӑмӑртува мӗнле организацилемеле

Буржуалӑ писательсем, капиталиссен тата капиталисла йӗркенӗн конкуренцийӗ, уйрӑм сынӑн ӗҫченлӗхне тата ытти савнашкал ытармала мар чаплӑлӑхсемпе илӗртӳсене мухтаса тем тери хут сырса пӗтерчӗ, пӗтерессӗ те. Социалиссене,—сав чаплӑлӑхсен пӗлтерӗшне ӑнласшӑн мар, „етем натурине“ хисепе хурасшӑн мар,—тесе айӑп тупнӑ. Чӑннипе илсен, капиталисӑм ӗҫченлӗхе, тимлӗхе, пуҫару хӑйулӑхне мӗн чухлӗ те пулса **анлӑн** сарма пултарнӑ конкуренцилӗ хӑйхаллӗн уйрӑм ӗҫлекен таварлӑ вакпроизводствӑ вырӑнне тахҫанах шултра тата шултраран та шултра фабрикалӑ производствӑ, акционерлӑ предприйатисем, синдикатсем тата урӑх йышши монополисем туса хунӑ. **Кун пек** капиталисӑм чухнехи конкуренци—вӑл халӑх **массин,** унӑн калама ҫук нумайӗнни, ӗҫсыннисен ҫӗртен тӑхӑрвун-тӑххӑрӗшин ӗҫченлӗхне, тимлӗхне, хӑйулӑ пуҫаруне никам илтмен тискерлӗхпе путарса лартнине пӗлтерет, савнашкалах ӑмӑртува финанс тӗлӗшне мошенникле ӗҫсем тунипе, халӑха чарусӑр пусмӑрланипе, обществӑн ҫӳлти сийӗнче тарҫӑланса пур майсемпе те йурама тӑрӑшнипе улӑштарнипе пӗлтерет.

Социалисӑм ӑмӑртува сӳнтермест кӑна ҫеҫ мар, пачах урӑхла, вӑл ӑна пуҫласа чӑн-чӑн **анлӑн,** чӑн-чӑн **массӑлӑн** ӗҫе кӳртсе пыма, ӗҫсыннисен чӑн-чӑн ытларахӑшне, вӗсем хӑйсене хӑйсем палӑртса пама, хӑйсен пултарулӑхне аш кӑртса йама, иксӗлми ҫӑлкуҫӗнчи шыв пекех, халӑх хушшинчи пит те нумай талантсене,—капиталисӑм пинӗ-пинӗпе, мӗлйуншарӑн ирпӗ, таптанӑ, пӑвнӑскерсене,—паларса тухма пулӑшакан ӗҫе йавӑҫтарма майсем уҫса парать.

Хаԉ, социалисӑмлӑ правительствӑ власра чухне, пирӗн задачӑ—ӑмӑртува организацилесси.

Буржуази хӳрешкисемпе буржуази шутӗнчен тӑранса пурӑнакансем социалисӑма пӗр тӗслӗ, казеннӑй, илемсӗр, сӑрӑ казарма пек кӑтартса тӑнӑ. Буржуалӑ господа интеллигентсем—мул хутаҫҫи лакейӗсем, експлоататӑрсен тарҫисем, шӑпах капиталисӑм вӑхӑтӗнче виҫесӗр йавӑр, ирӗксӗр ӗҫӗн, выҫӑлӑ-тутӑлӑ пурӑнӑҫпа асаплӑ кӗлмӗҫлӗхӗн каторгипе казармине пӳрнӗ халӑха, „социалисӑмпа хӑратнӑ“. Ӗҫсыннисене сав катӑргӑран ирӗке кӑларас ӗҫӗн пуҫламӗш утӑмӗ вӑл—помещиксен ҫӗрӗсене конфискаци туни, рабочисен контроԉне ӗҫе кӳртни, банксене национализацилени пулать. Малашнехи утӑмсем—фабрикӑсемпе заводсене национализацилесси, пӗтӗм халӑха ирӗксӗрлесех потребительлӗ обществӑсене,—вӗсем сав вӑхӑтрах тата продуктӑсем сутса тӑракан обществӑсем пулаҫҫӗ,—йавӑҫтарасси, тырӑ тата ытти продуктӑсем сутса илессине государствӑ монополийӗ тӑвассисем пулаҫҫӗ.

Ӗҫченлӗхе, ӑмӑртува, хӑйулӑ пуҫарува палӑртма пулӑшакан майсене анлӑн, чӑннипе массӑлӑн туса парасси хаԉ тин пулать. Капиталиса вон кӑларса сирпӗнтернӗ йе ӑна чӑн-чӑн рабочи контролӗпе ҫавӑрлӑхланӑ кашни фабриках, помещик—експлоататора тӗтӗрсе тустарнӑ тата унӑн ҫӗрне тӳртса илнӗ кашни йалах халӗ, халӗ тин ӗнтӗ ӗҫлев сынни хӑйне кӑтартса пама пултармали, пӗкӗртнӗ ҫурӑмне кӑшт ҫӗклеме пултармали, ирӗклӗн йаш тӑма пултармали, хӑйне хӑй сын вырӑнче туйма пултармали ирӗк вырӑн пулса тӑрать. Темиҫе ҫӗр ҫул хушши йута ӗҫлени, експлоататорсемшӗн ирӗксӗр ӗҫлени хыҫҫӑн чи пуҫласа **хӑйшӗн ӗҫлес,** кунпа пӗрлех кӗрешсе илнӗ ҫӗнӗ йышши техникӑпа кулԉтурӑн пӗтӗм ситӗнӳвӗсем сине тайанса ӗҫлес май тухса тӑрать.

Паллах, етем историнчи сак аслӑран та аслӑ улӑштару,—ирӗксӗр ӗҫлеве хӑйшӗн пулса пыракан ӗҫлевпе улӑштарни,—пӗр тытӑнчӑксӑрах, йавӑрлӑхсемсӗрех, хирӗҫӳсемсӗрех, сӑхӑмланса ҫитнӗ харам пырсемпе вӗсен хӳрешкисене пусмӑрламасӑрах пулма пултараймасть. Кутӗлӗшне рабочисенчен никамӑн та иԉԉузи ҫук: експлоататорсемшӗн нумай-нумай ҫулсем хушши катӑргӑри пек ӗҫлесе тӑрса пиҫӗхнӗ, експлоататорсем йенчен вӗҫӗмсӗр мӑшкӑл тӳссе тата сын вырӑнне хумасӑр кӳрентерсе ситернипе пиҫӗхнӗ, асаплӑ нушапа пиҫӗхнӗ рабочисемпе чухӑн хресченсем, експлоататорсем хирӗҫ тӑнине **ҫапса хуҫмашкӑн** вӑхӑт кирлине пӗлеҫҫӗ. Капиталиссене хирӗҫ сас ҫухаличчен „кӑшкӑракан“, вӗсене хирӗҫ „хӑҫланакан“, сӑмахпа вӗсене „ҫапса ҫӗмӗрекен“, анчах сӑмахрине **ӗҫре тӑваси патне** ҫитсен, йунанисене пурнӑҫа кӗртесси патне ҫитсен, капиталиссене тирпӗнтерсе антарассине кулленхи ӗҫре пурнӑҫласси патне ситсен йӗрсе йаракан, хӑйсене хӑйсем хӗнене йытӑ ҫури пек тытӑлакан господа интеллигентиксен, пур сав новожизненцӑн тата ытти савӑн йышши хӑпӑр-лапӑрсен кӗклентерес турапах ачаш кӑмӑллӑ пуш ӗмӗчӗпе рабочисемпе хресченсем нимӗн чухлӗ те чирлемен.

Ирӗксӗр ӗҫлеве хамӑршӑн пулса пыракан ӗҫлевпе калама ҫук пит те пысӑк, пӗтӗм государствӑ (хӑшпӗр йенчен интернационаллӑ, пӗтӗм тӗнче) калӑпӗнче план тӑрӑх организациленӗ ӗҫлевпе улӑштарни,—сак аслӑран та аслӑ улӑштару,—пролетариатпа чухӑн хресченсене, експлоататорсем хирӗҫ тӑнине „вӑрҫӑллӑ“ меслетсемпе путарнисӗр пуҫсӑр, тата питӗ те пысӑк **организацилӗ,** организаторлӑ вӑй тупма хушать. Организацилӗ задачӑ ӗнер чура хуҫисем пулнӑскерсене (капиталиссене) тата вӗсен лакейӗсен ушкӑнне—господа буржуалӑ интеллигентсене—вӑрҫӑллӑ меслетсемпе пӗр хӗрхенӳсӗр путарса лартас задачӑпа ниҫепле уйӑрлми сыхӑнса, пӗрреленсе тӑрать. Ӗнер йалпах организаторсемпе начальниксем пулнӑ, ӗнер командовать тунӑ—ҫапла калаҫҫӗ тата шухӑшлаҫҫӗ ӗнер чура хуҫисем пулнӑскерсемпе интеллигентсем хушшинчи вӗсен прикащикӗсем—ӗнер ҫаплипех пулма шутлатпӑр, „простой халӑха“, рабочисемпе хресченсене ӗнер итлеместпӗр, ӗнер вӗсене пахӑнмастпӑр, хамӑр пӗлӳве мул хутаҫҫи привилегийӗсене тата капитал халӑха пусмӑрласа тӑрассине хӳтӗлес хатӗр туса хурӑпӑр тессӗ.

Ҫапла калаҫҫӗ, шухӑшлаҫҫӗ, ӗҫлеҫҫӗ буржуапа буржуалӑ интеллигентсем. Хӑйсен **тирӗ** йенчен вӗсем ун пек хӑтлантарнине ӑнланмала марри нимӗн те ҫук: крепостник-помещиксен шутӗнчен, вӗсен тавранӗнче тӑранса пурӑнакан пупсене, подйачисене, Гоголԉ сырнӑ сӑнарлӑ чиновниксене, Белинскийӗ курайман „интеллигентсене“ крепостной йӗркерен ӗмӗрлӗхех уйӑрӑлма „йывӑр“ пулнӑ. Анчах експлоататорсемпе вӗсен интеллигентла тарҫисен ӗҫӗ—шанчӑксӑр ӗҫ. Вӗсем хирӗҫ тӑнине рабочисемпе хресченсем ҫапса хуҫаҫҫӗ—кӳренмелӗх, ситеӗклех сирӗппӗн, татӑклӑн тата пӗр хӗрхенмесӗрех мар-ха та,—**ҫапса хуҫаҫҫех.**

„Простой халӑх“, „простой“ рабочисемпе чухӑн хресченсем аслӑ, сӑмаха пӗтӗм тӗнчери историлӗ пӗлтерӗшӗ йенчен илсен, чӑннипех те паттӑрлӑ задачӑна, организацилӗ характерлӗ задачӑна,—ӗҫсыннисен хулпуҫҫийӗ сине социалисӑмла револԉуци хунӑскерне,—ӗҫсе илеймӗҫ тесе шухӑшлаҫҫӗ „вӗсем“. „Пирӗнсӗр пултарайрас ҫук“—тесе йӑпатаҫҫӗ хӑйсене, капиталиссемпе капиталисла государствӑна служить тума хӑнӑхнӑ интеллигентсем. Вӗсен ирсӗр, цамӑссӑр шухӑшӗсем тӗрӗсе тухаймӗҫ: вӗреннӗ сынсем халӗ те ӗнтӗ халӑх йенне, ӗҫсыннисем йенне тӑрса, капитал тарҫисем хирӗҫ тӑнине ҫапса хуҫма пулӑшса паларса тӑраҫҫӗ. Организаторла талантсем хресченсемпе рабочи клас ретӗнче нумай; сак талантсем ак хаԉ ҫеҫ хӑйсем кам иккенне тавҫӑрса илме, вӑранма, вӗрсе тӑракан творчествӑлӑ аслӑ ӗҫ патнеле туртӑнма, социалисӑмла обществӑ тӑвас ӗҫе хӑйсем халлӗн тытӑнма пуҫлаҫҫӗ.

Хаԉ чи паха задачӑсенчен пӗри, ахӑр чи паха пулмасан, творчествӑлӑ **организацилӗ** ӗҫ йенӗпе рабочисен тата пӗтӗм ӗҫсыннисемпе експлоатациленекенсен ҫав хӑйхаллӗнлӗхлӗ пуҫаруне мӗн май килнӗ таран анлӑн сарса йарасси пулать. Государствӑна тытса пыма, социалисӑмлӑ обществӑн организацилӗ строительствине туса пыма „ҫӳлти клас“ текеннисем кӑна, пуйансем йе пуйан классен пурнӑҫ шкулне пӗтернӗскерсем кӑна пултараҫҫӗ текен кӑтартакан ӗлӗкхи, йалтах суйӑ, чурӑс, киревсӗр тата ирсӗр тӗшмӗше кирек мӗнле пулсан та ҫапса хуҫас пулать.

Вӑл тӗшмӗш. Сав тӗшмӗш кивӗ те сӗрӗк йӗркесенчен хӑпма пӗлменни пирки, кӑнса хытса ларни пирки, чуравлӑ хӑнӑху пирки, кусенчен ытларах, халӑха саратса тытса пыма тата тытса тӑрса саратма тӑрӑшакан капиталиссен ирсӗр сӑткӑнлӑхӗ пирки тытӑнса тӑрать. Сук.

Рабочисем хӑйсене пӗлӳ вӑйӗ кирлине пӗр минутлӑха та манас ҫук. Рабочисем аслӑлӑха вӗренес ӗҫре ҫавтери тӑрӑшни, шӑпах ак хаԉ тӑрӑшни, пролетариат ретӗнче кун пирки кирлӗ марла ӑнлану (атащу) ҫуккине тата пулас та ҫуккине лайӑх кӑтартса ӗнентерсе парать. **Организаторла** ӗҫ хута пӗлекен, сынсене пӗлекен, практикӑла опыт пур **рйадовой** рабочипе хресчене те вӑй ҫемми ӗҫ. Кун пек сынсем буржуалӑ интеллигентсем ӑнлама кӑмӑлланса, йӗрӗнсе сӑвар уҫса асӑнакан „простой халӑх“ хушшинче массипе. Кун пек талантсем рабочи класпа хресченсем хушшинче пуҫламан ҫӑлкусӗнчи, иксӗлми ҫӑл кусӗнчи шыв пек вӗсӗ хӗрхисӗр нумай.

Рабочисемпе хресченсем „пиклонерех“ тӑраҫҫӗ-ха, **вӗсем** хаԉ хӑйсем **пуҫпулса** тӑракан клас пулни иккенне хӑнӑхса ҫитеймен-ха, ҫителӗклӗ таран хӑйулӑ, татӑклӑ мар-ха. Выҫлӑх тата нуша пирки пӗтӗм ӗмӗр тӑрӑшни патак сине ӗҫлеме тивнӗ мӗлйун-мӗлйун халӑхра сав пахалӑхсене переворот **сасартӑках** суратса кӑларма пултарайман. Анчах 1917 ҫулти Октябӗр революцийӗн вӑйӗ, унӑн пурнӑҫлӑхӗ, унӑн ҫӗнтерӳлӗхӗ хӑй те ӗнтӗ сав пахалӑхсене **вӑратнинче,** пур кивӗ чӑрмавсене ватнинче, кивелсе кайнӑ тӑлӑсене татнинче, ӗҫсыннисене ҫӗнӗ пурнӑҫа **хӑйсем халлӗн** тӑвас сул сине илсе тухнинче.

Учет тата контроԉ—акӑ кашни рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачӗсен Совечӗн, кашни потребительлӗ обществӑн, кашни союзӑн йе снабжени комитечӗн, кашни фабрикӑпа завод комитечӗн йе рабочисен контролӗ органӗсен економикӑлла **тӗп** задачи.

Ӗлӗкхи хӑнӑхупа—ӗҫ виҫи сине, производствӑ хатӗрӗсем сине ирӗксӗрлетнӗ сын кусӗсемпе пахас: ытлашки йавӑрлӑхран мӗнле пушанасчӗ, **буржуазирен** мӗнле пӗр татӑк та пулса ытларах шӑйӑрса илесчӗ текен. Халӗхи вӑхӑтшӑн ҫак кивӗ хӑнӑхупа кӗрешни пит те кирлӗ. Сав кӗрешӳве малта пыракан, ӑнланулӑ рабочисем пуҫларӗҫ ӗнтӗ, вӗсем фабрикӑсене вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче уйрӑмӑнах нумай килсе тулнӑ **халӑх** фабрикӗ сине, халӑх харпӑрлӑхне куҫнӑ фабрика сине халӗ те пӗртен пӗр ӗмӗтлӗ шухӑшпа: „пысӑктарах татӑк шӑйӑрса илет те тарас“, тесе пӑхакансене хирӗҫ татӑклӑн отпор параҫҫӗ. Хресченсен ретӗнче тата ӗҫсыннисен массинче кам ӑстӑнли, тӳр кӑмӑлли, шухӑшлаканни пур, ҫавсем пурте сав кӗрешӳре малта пыракан рабочисен йенне тӑрӗҫ.

Учетпа контроԉ, ӑна рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачӗсен Совечӗсем—государствӑн чи аслӑ власӗ, йе **ҫак** влас кӑтартса пани тӑрӑх, полномочи пани тӑрӑх туса пыраҫҫӗ **пулсан,**—пур вырӑнта та, пурне те тивӗҫ, универсаллӑ учетпа контроԉ,—мӗнчухлӗ ӗҫленине тата продуктӑсене валеҫнине учетпа контроԉ туни—ҫакӑнта ӗнтӗ,—пролетариат политикӑ йенчен пуҫпулса тӑрассине туса хунӑ пулсан,—социалисӑмла сӗнетессин **тупсӑмӗ.**

Учетпа контроԉ,—социалисӑма кусма кирлӗскерсем,—массӑлӑ кӑна пулма пултараҫҫӗ. **Пуйансен, жуликсен, харам пырсен, хулигансен** кашни утӑмнех учета илсе контроллесе пырас ӗҫе рабочисемпе хресченсен **массисем** пӗр пулса, хӑйсем ирӗклӗн тата тӳр кӑмӑллӑн, револԉуцилӗ хавхалӑхпа туса пыни кӑна, ылханлӑ капиталисӑмлӑ обществӑн йулашкийӗсене, капиталисӑмран социалисӑма йӗткере йулнӑ етемлӗхӗн сав тислӗкӗсене, сав шанчӑксӑр сӗрӗксемпе вилӗсене, сав йерекен чирӗ, чумана йухан-сурана сӗнтерме пулать.

Рабочисемпе хресченсем, ӗҫсыннисемпе експлоатациленекенсем! Ҫӗр, банксем, фабрикӑсем, заводсем пӗтӗм халӑх харпӑрлӑхӗ пулса тӑчӗҫ. Производствӑпа продуктӑсене валеҫессине учета илсе контроллесе пыма хусамӑр тытӑнӑр.

Учетпа контроԉре тата ӑна хусамӑр туса пынинче кӑна, савӑнта **кӑна** социалисӑм ҫӗнтерес май, вӑл ҫӗнтерес шанӑс, пур тӗрлӗ експлоатацийе, пур тӗрлӗ нушала кӗлмӗҫлӗхе ҫӗнтерес шанӑс! Мӗншӗн тесен Российӑра тырпул, тимӗр, вӑрман, ҫӑм, сӗрмамӑкӗпе йӗтӗн пурин валԉи те ситет,—ӗҫлевпе продуктӑсене тӗрӗс ҫеҫ валаҫесчӗ, сав валаҫҫе ӗҫе пӗтӗм халӑх йенчен **ӗҫхӗллӗ практикӑна** контроллесе тӑмала ҫеҫ тӑвасчӗ, халӑх тӑшманӗсене: пуйансене тата вӗсен шутӗнчен тӑранса пурӑнакансене,—кусем хыҫҫӑн жуликсене, ӗҫсӗр хырӑмсене тата хулигансене политикӑра **кӑна мар** тата **куллен кунхи економикӑлӑ** пурнӑҫра та ҫӗнтересчӗ ҫеҫ.

Халӑхӑн сав тӑшманӗсене, социалисӑм тӑшманӗсене, ӗҫсыннисен тӑшманӗсене пӗр хӗрхенӳ те, нимӗнле касару та пулмала мар. Кун-ҫул мар, вилӗм кӳрекен вӑрҫӑ—пуйансене тата вӗсен шутӗнчен тӑранса пурӑнакансене, буржуалӑ интеллигентсене, вӑрҫӑ—жуликсене, ӗҫсӗр хырӑмсемпе хулигансене. Лешсем те кусем те, пирвайхисем те кайранхисем те тӑван пиччӗшӗн шӑԉнӗсем, капиталисӑм ачисем, улпутпа буржуалӑ обществӑн,—вӑл обществӑра пӗр пӗчӗк ушкӑн халӑха сӳратса тата халӑхран мӑшкӑласа пурӑнать,—нушапа кӗлмӗҫлӗх сынсене пинӗ-пинӗпе хулиган, сутӑну, жулик сулӗ сине, сын сӑнне ҫухатас ҫул сине тӑратакан обществӑн,—експлоатацирен ултавпа та пулин пӑрӑнас, кӑмӑл туртман ӗҫрен пӗр минутлӑха та пулса вӗҫерӗнсе хӑтӑлас, выҫӑ ларас мар тесе, хӑй те тата хӑйне сывӑххисем те выҫӑлӑ-тутӑлӑ ларнине туйас мар тесе, кирек мӗнле майпа та, кирек мӗнле хакпа та пулса пӗр татӑк та пулса ҫӑкӑр шӑйӑрса илес туртӑма ӗҫсыннисенче иртоймипех суратса тӑракан обществӑн ывӑлӗсем вӗсем.

Пуйансемпе жуликсем—пӗр медалӗн ик йенӗ вӗсем,—капиталисӑм тӑрантса пӑхса ӳстернӗ паразитсен икӗ тӗп разрачӗ вӗсем,—социалисӑмӑн тӗп тӑшманӗсем вӗсем, вӑл тӑшмансене пӗтӗм халӑхӑн кусран ҫухатмасӑр асӑрхаса тӑмала, социалисӑмлӑ обществӑн йӗркисемпе саккунӗсене пӑртак ҫеҫ пассанах вӗсене пӗр хӗрхенмесӗр ҫапса хуҫмала. Сав тӗлӗшрен кирек мӗнле йавашлӑх та, кирек мӗнле туртӑнкаланса тӑни те, ачашлӑха кирек мӗнле палӑртса тӑни те социалисӑм умӗнче пысӑкран та пысӑк айӑпа кӗни пулнӑ пулӗччӗ.

Социалисӑмлӑ обществӑна сав паразитсенчен сийенсӗрлетес шутпа ӗҫлев шутне, производствӑна тата продуктӑсене валеҫес ӗҫе пӗтӗм халӑх учета илсе контроллессинӗ мӗлйун та мӗлйун рабочисемпе хресченсем хӑйсем ирӗклӗн, тимлӗн, револԉуцилӗ хавхалӑхпе пулӑшса тӑракан учетпа контроле — организацилемеле. Анчах пур тӳрӗ кӑмӑллӑ, ӑслӑ, пуҫлӑ, йӗркелӗ рабочипе хресчен те **тума пултаракан,** пит те вӑй ҫеммилӗ учетпа контроле организацилес тесен, рабочисемпе хресченсен хӑйсӗнӗн, вӗсен хушшинче ҫуралса ӳснӗ организаторла талантсене вӑйлӑн аталантарса йамала, организаторла ӑнӑҫу тӗлӗшпе, вӗсен хушшинче—тата пӗтӗм государствипе те—**ӑмӑрту** тапратса сарса йарас пулать, ӑслӑлӑха вӗреннӗ сынӑн кирлӗ канашлувӗпе „простой“ рабочисемпе хресченсенӗн „вӗреннӗ“ сынсен сав тери час-часах пулкалакан **тирпейсӗрлӗхне** контроллесе пыма кирли хушшинчи уйрӑмлӑха рабочисемпе хресченсем уҫҫӑн ӑнланса илни кирлӗ.

Сав тирпейсӗрлӗх, пуҫтарусӑрлӑх, ӗҫе вӑхӑтра туса пыманни, нервӑлӑ анкеленчӗклӗх, ӗҫхӗле—дискуҫҫипе, ӗҫе—сӑмах ҫапнипе ирттерсе йама туртӑнни, пур тӗрлӗ ӗҫе те пырса сыпӑҫӑнса пӗрине те вӗҫне ситерейместӗрех пӑрахма туртӑнни, саксем—„вӗреннӗ сынсен“ уйрӑмлӑхӗсенчен пӗри. Ун пеккисем вӗсем пӗре те вӗсем хӑйсем сапла пулнинчен мар, вӗсем усал суннинчен те мар, вӗсен пурнӑри пӗтӗм хӑнӑхувӗсенчен, хӑйсен ӗҫлев условийӗсенчен, ывӑнса ситнинчен, ӑспуҫ ӗҫӗ ал-ура ӗҫӗнчен виҫесӗр уйӑрӑлса кайнинчен, тата ытти савӑн пеккисенчен те тухса тӑраҫҫӗ.

Пирӗн револԉуцин йӑнӑшӗсем, ситменлӗхсем, кӑлтӑкӗсем хушшинче сав пирӗн хушӑмӑрти интеллигентсен хурлантарулӑ—анчах ку вӑхӑтра пур-пӗрех иртсе кайайми—паллисем тата интеллигентсен **организаторла** ӗҫне **рабочисем** йенчен ҫителӗклӗ таран контроԉ туса тӑманни кӑларса тӑратакан йӑнӑшсем т. ур. те пӗчӗк вырӑн мар йышӑнаҫҫӗ.

Рабочисемпе хресченсем „хӑйусӑрланаҫҫӗ-ха“, сав хӑйусӑрлӑхран вӗсен хӑтӑлмала, **паллах,** вӗсем хӑтӑлӗҫ. Вӗреннӗ сынсен, интеллигентсен, специалиссен канашӗсӗр, йертсе пыракан кӑтартувӗсемсӗр иртме ҫук. Мӗн чухлӗ те пулса ӑс-пуҫлӑ рабочипе хресчен те сава пит те аван пӗлет, пирӗн хушӑмӑрти интеллигентсем рабочисемпе хресченсем йенчен ӑн кӑмӑлпа йулташлӑ хисеплӗх ҫук тесе ӳпкелешме пултараймаҫҫӗ. Анчах канашлупа йертсе пыракан кӑтартусем, пӗр ӗҫ, **практикӑлӑ** учетпа контроле организацилесси—тепӗр ӗҫ. Интеллигентсем йаланпа пӗрех калама ҫук лайӑх канашлусемпе йертсе пыракан кӑтартусем параҫҫӗ, анчах кулӑ таранах, **ӑнланма ҫук** таранах, мӑшкӑл таранах „алӑсӑр“, сав канашлусемпе кӑтартусене **пурнӑҫа кӳртме** пултарусӑр, сӑмаха ӗҫе кӳртме **практикӑлӑ контроԉ** туса пыма вӑйсӑр пулса тӑраҫҫӗ.

Акӑ ҫта ӗнтӗ „халӑхран“ тухнӑ, рабочисемпе ӗҫхресченӗсенчен тухнӑ практик-организаторсен пулӑшувӗсӗр тата вӗсен **йертсе пырас ролӗсӗр** ниҫепле те пулма ҫук. „Чӳлмексене турӑсем мар тӑваҫҫӗ“—сак чӑнлӑха рабочисемпе хресченсен асне пуррипчен ытла ҫирӗп тытса тӑрас пулать. Вӗсен ҫакна ӑнланас пулать: халӗ пӗтӗм ӗҫ **практикӑра,** шӑпах теори практикӑна куҫакан, практикӑпа чӗрӗлекен, практикӑпа йусанакан, практикӑпа тӗрӗсленекен историлӗ вӑхӑт ситнӗ, халӗ уйрӑмах Маркс: „практикӑлӑ йухӑмри пур йышши утӑм та дйужин програмсенчен пахарах“ тенӗ сӑмахӗсем тӗрӗс пулнӑ вӑхӑт ситнӗ,—пуйансемпе жуликсене кулленкунхи ӗҫпеле чӑнласа ҫавӑрлӑхлатакан, чакаракан, пур йенчен те учета илсе контроԉесе пыракан кирек мӗнле утӑм та социалисӑм ҫинчен пыракан ытармала мар лайӑх сӑмах-йумах дйужинӗнчен пахарах пулнӑ вӑхӑт ситнӗ. Мӗншӗн тесен, теори, манӑн тусӑм, сӑрӑ, анчах пурнӑҫӑн ӗмӗрсӗр йывӑҫҫи симӗс“.

Рабочисемпе хресченсен ретӗнчен тухнӑ практик-организаторсен пӗр-пӗрин хушшинчи ӑмӑртуне организацилемеле. Интеллигентсем пӗр манера лартма пӑхнине, ҫӳлтен пӗр йевӗре кӳртме хӑтланнине хирӗҫ кӗрешес пулать. Демократилӗ тата социалисӑмлӑ централисӑмпа пӗр манерпа виҫене лартни хушшинче те, ҫӳлтен пӗр йевӗре кӳртни хушшинче те нимӗнле пӗрлӗх те ҫук. Тӗпри, тымарти, пӗкӗсри пӗрлӗх тӗплӗхре, вырӑнти уйрӑмлӑхсенче, ӗҫхӗле **тытӑнас** майсенче, контроле пурнӑҫлас **меслетсенче,** паразитсене (пуйансемпе жуликсене, тирпейсӗрсемпе интеллигентсем хушшинчи истерикӑсене т. ыт. с. т. ур) пӗтерес тата сийенсӗрлетес **ҫулсен нумай йевӗрӗпе** пӑсӑлмасть, йалтах урӑхла, пурнӑҫланать ҫеҫ.

Париж коммунӗ пуҫарулӑха, хӑйхаллӗнлӗхе, йухӑмӑн ирӗклӗхне, айалтан тапраннин вӑйхӑватне,—вӑл ирӗклӗ, пӗр манера йутӑ, централисӑмлӑ,—мӗнле пӗтӗҫтерсе пымалине кӑтартса пачӗ. Пирӗн Советсем те сав сулпах пыраҫҫӗ. Анчах вӗсем, „именеҫҫӗ-ха“, сарӑлса ситмен-ха, социалисӑмла йӗркесем тӑвас хӑйсен ҫӗнӗ, аслӑ, творчествӑлӑ ӗҫӗн „ӑшне кӗрсех“ ситмен-ха. Ӗҫхӗле Советсем хӑйуллӑрах та пуҫарулӑрах тытӑнни кирлӗ. Кашни „коммунӑ“—кирек хӑш фабрикӑ, кирек хӑш йал, кирек хӑш потребительлӗ обществӑ, кирек хӑш снабжени комитечӗ—пӗр-пӗрипе **ӑмӑртса,** ӗҫлевпе продуктӑ валеҫӳне учета илсе контроллесе пырас ӗҫӗн практикӑлӑ организаторӗсем пулни кирлӗ. Сав учетпа контролӗн программи сӑмӑл, уҫӑ, пуриншӗн те ӑнланмала: кашниййӗнех ҫӑкӑр пултӑр, урапа сине тӑхӑнмали пуринӗн те сирӗн те питӗ пултӑр, ӑшӑ пӳрт пултӑр, тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлечӗр, пӗр жулик та (сав шутрах ӗҫрен пӑрӑнса сӳрекен те) ирӗкре сапкаланса ан сӳретӗр, тӗрмере лартӑр, йе ирӗксӗр ӗҫлеттернӗ ҫӗрелексе ун йавӑр ӗҫсене ӗҫлесе наказанине иртертӗр, социалисӑм йӗркисемпе саккунӗсене пасакан пӗр пуйан та жулика пӳрнинчен,—тивӗҫлипех пуйана пӳрсе пани пулмаласкерӗнчен,—ан хӑтӑлтӑр. „Кам ӗҫлемест, сав симест“—ак ӗнтӗ социалисӑмӑн **практикӑлӑ** заповечӗ. Акӑ мӗне ӗнтӗ **практикӑра** майласа йапи кирлӗ. Акӑ ӗнтӗ мӗнле **практикӑлӑ** ӑнӑҫусемпе кӑмӑлӗсене ӳстерсе саванмала пирӗн „коммунӑсен“ тата рабочисемпе хресченсен ретӗнчен тухнӑ организаторсен, интеллигентсен ретӗнчен тухнисен пушшех те (**пушшех те,** мӗншӗн тесен вӗсем хӑйсен нетӗмӗшле кӑтартувӗсемпе тата резолԉуцийӗсемпе мӑнаҫланма **ытла та** хӑнӑхнӑ, **вӗҫӗмсӗр** хӑнӑхнӑ).

Пуйансен, жуликсен, харампырсен кашни утӑмне учета илсе контроллесе пырас ӗҫре коммунӑсен, йалсенчипе хулари пӗчӗк йачейкӑсен хӑйсен ниппер формӑсем тата меслетсем тупса вӗсен витӗмлӗхне практикӑра сӑнаса пымала. Сак ӗҫре меслетсем, майсем нумай та тӗрлӗ пулни учетпа контроԉ вырӑнлӑ та витӗмлӗ пулнине пӗлтерет, пуринпе те пӗртен пӗр **тӗллеве:** Российӑ ҫӗрӗсене пур сийенлӗ хурт-кӑпшанкӑсенчен, сикеппӑрҫасенчен—жуликсенчен, хӑнкласенчен—пуйансенчен, т. ыт. т. ыт. **тасатас** тӗллеве ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласса шантарать. Пӗр ҫӗрте пӗр вунӑ пуйана, дйужинӑ жуликсене, сур дйужинӑ ӗҫрен пӑрӑнса сӳрекен рабочисене (Питӗрте, уйрӑмах партилӗ типографисенчи ӗҫрен пӑрӑнакан чылай наборщиксем пекех хулиганла) пӑрӑнса сӳрекен рабочисене тӗрмене лартӗҫ. Тепӗр ҫӗрте вӗсене сахутсем тасатма хушӗҫ. Виҫҫӗмӗш ҫӗрте вӗсене тӗрмесенчи пӗччен лармали вырӑнсенче ларса тухнӑ хыҫҫӑн, сийен кӳрекен сынсем вырӑнне хурса, мӗн тӳрленсе ҫитиччченех пӗтӗм халӑх кусран сухатмасӑр сӑнасса тӑма сарӑ билетсем туйантарӗҫ. Тӑваттӑмӗш ҫӗрте харампыр пулнӑшӗн вуннӑшӗнчен пӗрне вырӑнти халӑх умӗнчех персе вӗлерӗҫ. Пиллӗкӗмӗш ҫӗрте урӑхла, тӗрлӗ майсем шухӑшласа тупӗҫ. Сӑмахран, калалӑр, пуйансен, буржуалӑ интеллигентсен, жуликсен, хулигансен ретӗнчен тухнӑскерсене, тӳрленме пултармалисене ирӗке условнӑ кӑларса хӑвартах тӳрлетӗҫҫӗ. Мӗн тери тӗрлӗрех, сав таран пӗтӗмлӗ опыт авантарах та пуйантарах пулӗ, сав таран социалисӑмӑн ӑнӑҫувӗсем шанчӑклӑрах та кӑвартрах пулӗҫҫӗ, сав таран кӗрешӳн чи **авантарах** майсемпе хатӗрӗсене практикӑ—пӗр практикӑ анчах вӗсене уйӑрса—сӑмӑллӑн уйӑрса илме пултарӗ.

Хӑш коммунӑра, пысӑк хулан хӑш кварталӗнче, хӑш фабрикӑра, хӑш йалта выҫӑ сынсем **ҫук,** ӗҫсӗр **сынсем ҫук,** пуйан харампырсем **ҫук,** буржуази лакейӗсенчен тухнӑ ирсӗрсем, хӑйсене интеллигентсем текен саботажниксем **ҫук** пулӗ? хӑшӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе нумайтарах ӗҫленӗ? чухӑнсем валԉи лайӑх ҫуртсем тӑвас, вӗсене пуйансен сурчӗсене куҫарса вырнаҫтарас ӗҫре нумайтарах ӗҫленӗ? чухӑн ҫемйери кашни пӗчӗк ачана кашни кун пӗр путылкашар сӗт вӑхӑтра парса тӑрас ӗҫре нумайтарах ӗҫленӗ?—ак мӗнле ыйтусем тӑрӑх коммунӑсем, йалсем, потребительлӗ-производствӑлӑ обществӑсемпе йулташлӑхсем, рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачӗсен совечӗсем хушшинче **ӑмӑрту** пуҫласа йамала. Ак мӗнле ӗҫре **организаторла талантсем практикӑлӑ** паларӑнса тухса тата сӳле, пӗтӗм государствӑ тытӑмне йертсе пырас ӗҫе, куҫса пымала. Вӗсем халӑх хушшинче нумай. Вӗсене пусарса лартнӑ анчах. Вӗсене ирӗкре хӑйсен вӑйне кӑтартма пулӑшас пулать. Вӗсем, **пӗр вӗсем анчах,** массӑ пулӑшсан, Российӑна ҫӑлма тата социалисӑм ӗҫне ҫӑлма пултарӗҫҫӗ.

1918 ҫ. йанварӗн 7—10-мӗшӗсенче сырнӑ. „Правда“ хаҫатра пуҫласа 1929 ҫулти йанварӗн 20-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ. Кунта ӗнер Ленин Сочиненисен XXII т. 158—167 стр. илсе пичетлетпӗр.

Ӑмӑрту умӗн колхозсем пӗр-пӗрне тӗрӗслеҫҫӗ

БУЗУЛУК, йанварӗн 8-мӗш. (ТАСС). Вилԉамс йачӗпе тӑракан машинӑ-трактор станци районне кӗрекен Ворошилов йачӗпе тӑракан колхоз „Советсен 7-мӗш Сйесӗ“ ертеле ҫуракине чи лайӑх хатӗрленме ӑмӑртува чӗннӗ. „Советсен 7-мӗш Сйесӗ“ колхоз вӑл чӗнӳве йышӑнса пӗр-пӗрин ӗҫне тӗрӗслесе тухма сӗнӳ панӑ.

Комиҫҫи Ворошилов йачӗпе тӑракан колхоза тухса кайнӑ. Кунта вара колхоз ҫуракине хатӗрленменни палӑрнӑ. Тӗрӗслев акти ҫине комиҫҫи сакӑн ҫинчен ҫырнӑ: 272 гектар ҫине акма тулӑ вӑрлӑхӗ кӳрсе килмен, 120 гектар ҫине акма сӗлӗ вӑрлӑхӗ ҫук, 492 гектар ҫине акма хатӗрленӗ ҫемҫе тулӑ вӑрлӑхне суртламан, сортировкӑсем нормӑна ҫурринӗ кӑна тултараҫҫӗ. Малала комиҫҫи инвентар мӗнле тӑни ҫинчен ҫырать: машинӑсене, инвентарсене тата ӳт кӳлмели хатӗрсене йусаман, 100 сӳре уйах йулнӑ, вӗсем йур айне пулнӑ, фургонсем ӑҫта май килнӗ унта йаваланса выртаҫҫӗ.

Пӗрремӗш бригадӑн бригадирӗ Нижегородов комиҫҫине: ҫуркунне пуласси инҫе-ха, пурне те туса ӗлкӗрме пулать, тесе каланӑ. Колхоз председателӗ Ростовцев те нимӗн те тумасть.

„Советсен 7-мӗш Сйесӗ“ колхозран пынӑ тӗрӗслев бригади колхозниксен пухуне пуҫтараттарнӑ, вӑл пухура бригадӑ колхоз ҫуракине хатӗрленменни ҫинчен каласа панӑ. Пуху председателрен тата бригадирсенчен болԉшевикла йӗрке тума ыйтнӑ.

Тепӗр кунне пурте ӗҫе тытӑннӑ: вӑрлӑха трийер витӗр кӑларас тӗлӗшпе икӗ сменӑпа ӗҫленӗ, нормӑсене 90 процент ӳстернӗ. Тимрӗҫлаҫҫи те ҫине тӑрса ӗҫлеме пуҫланӑ. Коԋухсем лашасем валԉи 29 хӑмӑт тупнӑ. Уйхир тӑрӑх сапаланса выртакан инвентаре пуҫтарма тытӑннӑ, йур каплантармалли шчитсем хатӗрлеме пуҫланӑ.

Ворошилов йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслеме „Советсен 7-мӗш Сйесӗ“ колхоза хӑйсен комиҫҫине йанӑ.

Магнитогорскри металлургсен стахановла ӗҫӗ

МАГНИТОГОРСК, йанварӗн 7-ш. „250“ стан прокатчикӗсем йанварӗн малтанхи пилӗккунлӑхӗнче планран иртерсе 343 тоннӑ металл панӑ. Хурҫӑ шӑратакан стахановец Колодяжный йулташ йанварӗн 5-мӗшӗнче пӗр тӑваткал метр кӑмака тӗпӗнчен 8,91 тоннӑ хурҫӑ шӑратса кӑларнӑ. Ҫӗнӗ техникӑла пултарулӑхпа вӑл кӑмака 8,76 тоннӑ шӑратса кӑларма пултарать.

Ӗҫтухӑҫлӑхӗ ӳснипе стахановецсен ӗҫукҫи те ӳсет. Хурҫӑ шӑратакан стахановец Смородин йулташ декабӗр уйӑхӗнче 1.492 тенкӗ, хурҫӑ шӑратакан Сазонов йулташ 1.283 тенкӗ, блԉумингӑн аслӑ операторӗ Тищенко йулташ 1 052 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ т. ыт те.

Сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлесси—парторганизацисен пысăк ĕçĕ

Январĕн 8-мĕшĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ хулари сочувствуйушчисен канашлуне туса ирттерчĕ. Канашлура сочувствуйушчисем хăйсене парти пуçламĕш организацийĕсем вĕренме, ÿсме мĕнле пулăшни, хăйсем производствăра, обществăлă ĕçре мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç.

Канашлура тухса каланă 15 сочувствуйушчи сăмахĕсенчен çакă лайăх курăнчĕ: Шупашкар хулинчи пуçламĕш организацисенчен чылайĕшĕ сочувствуйушчисем парти ретне çĕнĕ вăйпа ÿстермелли чи паха резервăсенчен пĕри пулнине ăнланмасть иман. Çавăнпа та, сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлесси, вĕсене вĕренме куллен пулăшса пырса, партине илме йĕркеллĕ тăвасси питĕ начар тăрать. Тĕрĕссипе илсен, партире тăман активиссене сочувствуйушчисен ушкăнне илнĕ вăхăтра малтанах ĕçленĕ пулсан, йулашкинчен хăйсен организацисенче сочувствуйушчисем пурри çинчен те манса кайнă.

Акă, хăшпĕр фактсем. Вĕсем хулари пуçламĕш организацисем те, партин хула комитечĕ те сочувствуйушчисем хушшинче начар ĕçленине йар уççăн кăтартса параççĕ.

Тир-сăран заводĕнчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчисен ушкăнĕнче 6 çын. Вĕсенчен нурăшчен ытла производствăри стахановецсемпе ударниксем, обществăлă ĕçре тăрăшса ĕçлеме йуратакансккерсем. Вĕсем сочувствуйушчисен ушкăнне 1936 çулта кĕнĕ. Анчах çак сочувствуйушчисене вĕрентес тĕлĕшпе парторганизаци нимĕн те тумасть.—Пире коммунисcен уçă пухусене те чĕнмеççĕ, епĕр вĕренесшĕн, анчах пире вĕрентме нимĕнле политкруж та организацилемен, епĕр хамăр тĕллĕн ĕçлетпĕр, — тет сочувствуйушчи **Казаков** йулташ.

Тир-сăран заводĕнчи парторганизаци пеккисем Шупашкар хулинче сахал мар. Чăвашсойузри, Йалхуçалăх Институтĕнчи, Банкăри, Строитрестри, Вăрмантрестри, НКВД-ри, Йустици Халăх Комиссариатĕнчи парторганизацисенче те сочувствуйушчисемпе ĕçлессине пăрахăçа кăларнă.

Сочувствуйушчи Есен йулташ (Йустици халăх комиссариачĕ) çапла калать:

— Йустици халăх комиссариатĕнчи, Аслă судри, прокуратурăри çитменлĕхсем çинчен сÿтсе-йавма парти пухуне пуçтараççĕ. Темĕн пек тухса калăттăм, мĕншĕн тесен, епĕ нумай йĕркесĕрлĕхсем çинчен пĕлетĕп. Анчах мана пихăçан та пухува чĕнмеççĕ. Партин уçă пухусене тумаççĕ. Çапла вара, пире парти йурнăçĕнчен пăраççĕ.

Сочувствуйушчисен парти ĕçне, партин организацилĕ ĕçне, хутшăнас хавасланăх пысăккине **Стĕшова** йулташ тухса калани лайăх кăтартса парать:

— Мана партин уçă пухуне чĕнни, маншăн праçник,—тет вăл. Епĕ парти пухувĕнче дисциплинăна, парти ĕçĕн опытне, обществăлă ĕçре ĕçлеме хăнăху илетĕп. Пуху маншăн шкул пулса тăрать. Анчах йулашки çулсенче партин уçă пухусене тумĕ пулчĕç.

Çак фактсем тĕрĕс. Канашлура 15 сочувствуйушчи тухса каларĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ 1936 çултанпа сочувствуйушчисен ушкăнĕнче тăраççĕ. Анчах çак 2 çул хушшинче партин уçă пухувĕсенче пулнисене астумаççĕ, йе пĕрер хут пулни çинчен çеç калаççĕ. Çапла вара сочувствуйушчисене партин уçă пухувĕсене чĕнмеле, тенĕ—çирĕп йĕркене нумай организацисенче пăхăнмаççĕ. Çав вăхăтрах парти пухувĕсем коммунисcемшĕн те, сочувствуйушчисемшĕн те вĕренÿ паха шкулĕсем пулса тăраççĕ.

Сочувствуйушчисем хушшинче ĕçлессин пысăк çитменлĕхĕ, тĕрĕсрех каласан, тĕп çитменлĕх—вĕсен идейĕне политикăла пĕлÿне хăпартас тĕлĕшпе ĕçлеменни пулать. Иртнĕ çулта çулларăн пуçласа кĕркуннене çитиччен сочувствуйушчисене Сталинла Конституцине Суйлав саккунне вĕренмелли кружоксене хутшăнтарнă. Анчах йулашки вăхăтра пĕр парторганизацинче те сочувствуйушчисене вĕрентекен кружоксем ĕçлемеççĕ.

— Вулатăп, тетрать çине çыратăп,—калать Гордейев йулташ (Чувашкуђ-Купромсойуз),—анчах, епĕ мĕнле вĕренетĕп? Мана никам та пулăшмасть, манăн ĕçе никам та тĕрĕслесе пăхмасть, вĕренме те пулăшакан çук.

Çапла ĕнтĕ, сочувствуйушчисене вĕрентес ĕçе нумай парторганизацисем хăйсен аллинчен вĕçертсе йанă. Çакна пула сочувствуйушчисем хушшинче паçсивлăхăн шухăшĕ те илтĕнет. Ку вăл пирĕн парторганизацисем ÿсĕ пыракан актива ĕçре çирĕплетме пĕлменнинчен, куллен вĕрентсе пыманнинчен килет.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленсе иртернĕ вăхăтра сочувствуйушчисем нумайĕшĕ агитаторсем пулса ĕçленĕ. Вĕсем агитаци ĕçне пĕрре те „питатлă“ агитаторсенчен начар туманнине çирĕплетекен фактсем темĕн чухлех. Хула комитечĕпе пуçламĕш организацисен задачĕ—сочувствуйушчисене çак ĕçре çирĕплетесси пулнă. Анчах та çакна хула комитечĕ те, пуçламĕш организацисем те туман. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ иртнĕ хыççăн, нумай организацисенче бољшевикла агитацине пропагандă ĕçне вăйсăрлатнă. Çакна пула сочувствуйушчисем те агитаци ĕçĕнчен уйăрăлса кайнă.

Сочувствуйушчисем парти ретне ÿстермелли шанчăклă резервă. Анчах та хулари организацисенче сочувствуйушчисемпе çапла начар ĕçленĕ условире ăçтан-ха парти ретне чи лайăх рабочисен, служăшчисен, интеллигенцин пучĕпе ÿсерессы тивĕçлипе пулма пултарать? Парти ретне илме йурăхлă çынсенчен халĕ нумайĕшĕ сочувствуйушчисен ретĕнче тăраççĕ. Çакна ăнланмала, сочувствуйушчисен ушкăнĕсене йертсе пырасси парторганизацисен тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулмала.

Р. Шашков.

Пирĕн çинчен маннă

Пирĕн парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчисен ушкăнĕнче 4 çын. Вĕсем пурте активиссем. Чылай вăхăт хушши ĕнтĕ обществăлă ĕçре активлă ĕçлеççĕ. Пĕр çул кайала парторганизаци пире вĕрентес, пулăшас тĕлĕшпе чылайах ĕçлеччĕ. Анчах та йулашки вăхăтра парторганизаци пирĕн çинчен пачах манса кайрĕ. Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен, вĕренес тĕлĕшĕнчен сочувствуйушчисен хаваслăхĕ питĕ пысăк. Анчах та халĕ пире вĕрентес, уйрăм ĕçсем хушас йĕнĕпе партком нимĕн те тумасть. Çакна пула епĕр йулашки вăхăтра агитаципе пропагандă ĕçĕнчен уйăрăлса кайма пуçларăмăр. Коммуниссем сочувствуйушчисене пĕлмеççĕ. Епĕ рекомендаци ыйтсан, хăш-пĕрисĕм: есĕ ăçта вĕренен, сочувствуйушчинче тăратни?, тесе ыйтаççĕ. Ку пачах тĕлĕнмеле вара.

Мĕнрĕн килет-ха çакăн пек ĕç? Пирĕн парторганизацисен партком секретарĕсем час-часах улшăнаççĕ. Çапла вара партком секретарĕсем хăйĕн организацийĕнче сочувствуйушчинче камсем тăнине те пĕлмеççĕ. Ĕç çакăн пек тăнă чухне ăçтан-ха сочувствуйушчисемпе йĕркелĕ ĕç пулма пултартăр. Ахаљтен мар ĕнтĕ пирĕн парторганизацинче 1935 çултанпа сочувствуйушчисен ретĕнчен пĕр çынна та парти членĕн кандитатне куçарман.

1937 çулта парторганизаци мана пĕрре те партин уçă пухуне чĕнмен. Тĕрĕссипе каласан, парторганизаци сочувствуйушчисен вăйĕпе уçă курма пĕлмест. Паллах ĕнтĕ ĕçе çакăн пек лартнă чухне епĕр, сочувствуйушчисем парти ретне кĕме пултараймастпăр. Пире вĕренме, ÿсме, парти ретĕнче пулма йурăхлă çын тума чи малтан пуçламĕш парторганизацисем пулăшмала. Хула комитечĕн пуçламĕш организацисене сочувствуйушчисем хушшинче лайăхрах ĕçлеттĕрмеле.

Банкри пуçламĕш организаци çумĕнчи сочувствуйушчи Прокопйева.

Епĕ вĕренетĕп

Епĕ сочувствуйушчисен ушкăнне 1935 çулта кĕтĕм. Бољшевиксен парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулас тесе производствăра та, вĕренÿре те примерлă пулма тăрăшатăп. Совет правин институтĕнче заочнă вĕренсе тухрăм. Халĕ диаматпа исмат кружокĕнче вĕренетĕп. Вĕренес ĕçлес, Ленин—Сталин парти членĕн мухтавлă йатне илме тивĕçлĕ пулас хаваслăх пысăк. Анчах та пирĕн парторганизаци сочувствуйушчисем хушшинче начар ĕçлет. Хутран ситрен мана тата ыттисене уйрăм ĕçсене хушаççĕ, епĕр вĕсене пысăк хаваслăхпа пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Çапах та, ку пирĕншĕн çителĕклĕ мар. Пире парти организаци патне тата çывăхрах çывхартмала. Халĕ ку çитмест-ха. Акă пĕр факт. Епĕ 1936 çултанпа пĕр хут та парти уçă пухувĕнче пулса курман. Çав вăхăтрах епĕ парторганизацине чылай пулăшма пултаратăп. Мĕншĕн тесен, епĕ хамăрăн организацири, учреждениri çитменлĕхсем çинчен нумай пĕлетĕп. Анчах епĕ вĕсем çинчен пухура тухса калама пултараймастăп.

Йустици Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчи Есен.

ОТВЕТЛĂ УЧАСТКĂ

Тир-сăран заводĕнчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчисен ушкăнĕнче 6 çын. Вĕсем пурте производствăри стахановецсемпе ударниксем, партипе совет влаçĕн ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем. Анчах вĕсем Ленин-Сталин парти ретне кĕме хатĕрленсе çитмен-ха. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем партине кĕме хатĕрленес тĕллевпе сочувствуйушчисен ушкăнне кĕнĕ.

Çак активпа парторганизаци куллен ĕçлесе пымала, ку парторганизацисен ĕçĕнчи ответлă участка. Анчах та пирĕн парторганизаци халĕ сочувствуйушчисемпе ĕçлессине пăрахăçа кăларнă. Пире вĕрентме парторганизаци пĕр кружок та организацилемен. Епĕр вĕренетпĕри, ĕçлетпĕри,—çакăнпа парторганизаци интересленмест. Епĕ хам стахановецсен шкулне çÿретĕп, унта пире производствă ĕçĕсене вĕрентеççĕ, анчах парти политикине, унăн историне вĕрентмеççĕ. Çапла вара епĕр политикăла пурнăçран -кайа йулатпăр. Епĕр кун çинчен парторганизацине пĕлтернĕ. Анчах вăл пире пĕрре те пухса калаçу туса ирттермест, пирĕн малашне мĕн тумалине, мĕнле ĕçлемелине кăтартса памасть.

Казаков.

175 процент тултараççĕ

ВĂРНАР вăрманпромхозĕнчи Игнатйев стахановец бригадинче 11 рабочи. Вĕсем пĕр-пĕрин хушшинче стахановла йухăма анлăн сарса йанипе кулленхи ĕç нормине 175 процентшар тултарса пыраççĕ. Игнатйева вăрманта лайăх ĕçленĕшĕн темиçе хутчен те премипанă.

Н. К.

Патефонпа премилерĕç

Айкăшри (Вăрнар р.) „Ирар“ колхоз членĕ Николай Петров рудникре стахановла йухăма пуçарса йаракансенчен пĕри пулнă. Вăл кулленхи ĕç нормине 200 процента йахăн тултарса пырать. Хăйĕн паха опычĕсене ытти рабочисене те парать. Çавна шута илсе Петров йулташа завод дирекцийĕ патефон парса премилерĕ.

Татах Патăрйел райкомĕн „руководстви“ çинчен

ПАТĂРЙЕЛ, декабĕрĕн 9-мĕшĕ (Хамăр корр.). Районри учреждениcенче халăх тăшманĕсем ларса финанс политикине пăсса, пуçуçавăрнăшне, вăрлăх тата выљăх-чĕрлĕх хуçалăхне арпаштарса тăшманла тата совета хирĕçле ĕçсем тунине кăтартса çырса „Чăваш Коммунĕ“ хаçат—„Парти райкомĕн руководстви—бољшевикла çирĕп, халăх тăшманĕсене—буржуалă националиссене, троцкиcене, бухаринцăсене тата тĕрлĕ йышши икĕпитлисене тĕпĕ-тымарĕпех тата пĕр хĕрхенмесĕр кăкласа пыракан пулмала“ тесе асăрхаттарчĕ. Çакăнтан парти райкомĕ тивĕçлĕ вывод тумарĕ.

Асăннă материалсене сÿтсе йавнă чух парторганизацин районри пухувĕнче райком секретарĕсем, самокритикăна пуçĕпех хĕссе лартни çакна аванах кăтартса пачĕ. Вĕсем, уйрăмăнах парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, икĕпитлĕ Чернов, самокритикăна хĕсмесĕр тăма пултарайман, тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене йăлтах тăрă шыв çине кăларса тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа пымала тăвасси те уншăн усăллă пулман. Мĕншĕн тесен, тăшманла ĕçсемçе сахалран та вăл хăй сыхланнă.

1936 çулта тырă вăйсăр пулнă пирки государствă колхозсене пулăшса тырă пачĕ. Анчах çак тырра колхозсене пулăшу йĕркипе валеççе парас вырăнне, комиссци (райком секретарĕ **Чернов**, халăх тăшманĕ — райĕçтăвком председателĕ пулнă Степанов тата райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулнă Иванов) колхозсене пĕлтермесĕрех, колхозсем государствăна кооперации урлă тырă сутнă пек туса, пулăшу фончĕ тырринчен Канашри заготзерно складне 500 центнер хăварнă. Колхозсене паман тырра 32 колхоза валеççе панă пек туса кăтартнă. Çапла вара Чернов тăшманĕсемпе çыхăнса тăшманла ĕçсем туса партин колхоз строительствине çирĕплетес тĕлĕшпе тытса пыракан политикине пăсна, колхозниксене кÿрентермелле совета хирĕçле ĕç туса хунă. Çакнашкал йĕркепех 1935 çулхине йединоличниксен страхфондĕнчен районĕпе 2 пин пăт ытла кооперации урлă тырă сутнă.

Райĕçтăвкомри тата районри финанс пайĕнче ларнă халăх тăшманĕсем финанс политикине пăсса государствăна пĕрмайăх улталаса пынă. 1936 çулти йалхуçалăх налогне пĕрремĕш срукра тÿлеме 699.497 тенкĕ те 87 пус панăртса финанс комиссариатне 584.502 тенкĕ те 48 пус çеç кăтартнă, 114.995 тенкĕ те 39 пус пытарса хăварнă.

Çакă вăрттăн пухнă налог укçи, страхфондран тата пулăшу фончĕнчен кооперации урлă сутнă тырăсен укçи те, тата вĕсен промтоварĕ те вăрттăн çулсемпе çеç кайма пултарнă.

Совет саккунĕсене пăсса, колхозниксемпе йединоличниксене кÿрентерсе ĕçлени: Патăрйел районĕн государствă умĕнчи обйазателствисене вăхăтра пурнăçа кĕртес, йалхуçалăх ĕçĕсене срукра тата тирпейлĕ туса пĕтерес ĕçсенче чăрмантармасăр тăма пултарайман. Йединоличниксем халĕ те 33 процента йахăн колхоз тулашĕнче тăни те ахаљрен килнĕ пулмала мар.

Сăтăрла тата совета хирĕçле ĕçсен йулашкисене хăвăрт тата бољшевикла принциплăхпа пĕтерсе пырасси, халăх тăшманĕсене тата вĕсене пулăшакансене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа тасатасси—Патăрйел парторганизацийĕн пайанхи паттăрла задачи пулса тăмала.

Ник. Пушкин.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ТРАК. Районра чылай колхозсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнчĕç. Йеншикри „Çĕнĕ вăй“ колхоз пайанхи куна 1500 лав тислĕк, 75 лав торф, 30 лав пĕве тĕпĕ уйа кăларнă. Плугсÿресене йусанă. Агротехникăна вĕренес тĕлĕшпе агрокружок организациленĕ. Унта 65 колхозник вĕренеççĕ. Çавăн пекех унпа ăмăртса ĕçлекен Кĕçĕн Чуллăри „Çĕнтерÿ“ колхозра та пайанхи куна уйа 600 лав тислĕк, торф, фекали кăларнă. Агротехникă кружокĕнче 30 çын вĕренет. Плугсем, сÿресем, лаша хатĕрĕсем пурте тирпейлĕ. Вăрлăхсене икĕ колхоз та суртласа амбарсене пуçтарса хунă. „Çĕнĕ вăй“ колхоз 15 гектар çине „Çĕнтерÿ“ колхоз 10 гектар çине йур тытса хăварнă, халь татах тытаççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем пайанхи куна çитсе те вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнман. Аслă Чуллăри „Прогресс“ колхоз кăçал тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларнă. Вăрлăхсене тасатма тытăнман. Йалхуçалăх машинĕсене кĕркунне йепле кĕртсе лартнă, çаплипех лараççĕ. Тислĕк, фекали, торф хатĕрлес тĕлĕшпе сас-чĕв те çук. Колхозниксем агротехникăна вĕренесшĕн, анчах вĕсене никам та вĕрентекен çук.

Райçĕрĕç пайĕ колхозсене çитес бољшевикла çуракине хатĕрленес çĕрте çителĕклĕ йертсе пымасть. Унта ĕçлекенсем хăш колхоз çуракине хатĕрленес çĕрте малта пынине те каласа пама пултараймаççĕ. „Прогресс“ колхоз çеç мар, Вăрманкасри „Венерă“ колхоз та çитес çулхи стахановла çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе „Çĕнĕ вăйпа“, „Çĕнтерÿ“ колхозсенчен пример илмеле.

А. Семенов.

Профсойузсен Тĕп Совечĕн секретарĕ С. БРЕГМАН

Социалисăмла ăмăрту ĕçре

(В. И. Ленинăн „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле“ статйи 20 çул тултарнă тĕле)

Етемлĕхĕн генийĕ, коммуниссен партин çулпуçĕпе организаторĕ В. И. Ленин хăйĕн „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле“ йатлă статйине çырнăран вара 20 çул çитрĕ.

Унчухне Октйаберти Социалисăмла револђуци пулни 2 уйăх анчах çитнĕ. Çамрăк, социалисăмла республик хуçалăхне империалисăмла вăрçăпа граждăн вăрçи йăлтах йухăнтарса çитернĕ пулнă. Çĕршер фабрикăсемпе заводсем ĕçлемен. Кăмрăк тата тимĕр тăпри кăларас ĕç шутсăр йапăхса çитнĕ. Йалхуçалăх продукци хытă чакса пыни çĕршыва выçлăхпа хăратнă.

Влаçа хăй аллине илнĕ рабочи класа кивĕ влаçран йухăнчăк хуçалăх кăна йулнă. Анчах та пролетариатăн обществăри положенийĕ тĕпренех улшăннă. Вăл пусмăрта пурăннă класран пуç пулса тăракан, çĕршывра хăйĕн диктатурине тунă клас пулса тăнă. „Темиçе çĕр çул хушши йута ĕçлени, експлоататорсемшĕн ирĕксĕр ĕçлени хыççăн, чи пуçласа, хăйшĕн ĕçлес, кунпа пĕрлех, кĕрешсе илнĕ çĕнĕ йышши техникăпа културăн петĕм çитĕнÿвĕсем çине тайанса ĕçлес май тухса тăрать“. (Ленин).

Хăйĕн „Ăмăртува мĕнле организацилемеле“ статйара Владимир Илйич мĕлйуншар ĕççыннисене ăмăрту ĕçне организацилеме хĕрÿлĕн чĕннĕ. Вăл уйрăм хуçасен ĕçчеллĕхне вĕсем лайăхрах ĕçлеме пултарнине мухтакан буржуалă писатĕлсене тăрăхланă. Капиталисăмла обществăри конкуренци халăхсен пуçарулăхне, вĕсен пултарулăхне, вăйне пĕтерет. Капиталисăм чухне ăмăртува финанс тĕлĕшпе мошениклe ĕçсем тунипе, халăха чарусăр пусмăрланипе, обществăн çÿлти сийĕнче тарçăланса пурмайсемпе те йурама тăрăшнипе улăштарнине пĕлтерет“. (Ленин).

Социалисăмла обществă çеç ĕççыннисене ĕçлеме, хăйсен пултарулăхне, талантсене палăртма, анлă май уçса парать. Халăх хушшинче пултарулăх, талант нумай, ăна капиталисăм лучăрканă, хĕснĕ, пăзнă, аталанма май паман. Çакна В. И. Ленин уççăн кăтартса панă.

Халĕ, Ленин çапла çырнăран вара 20 çул çитнĕ кун, Ленин малашнехи ĕçе мĕнле генилĕ курса тăнине епĕр тата тепĕр хут куратпăр. Коммуниссен партийĕпе аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пыракан Совет Сойузĕнчи халăхсем пирĕн халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ участкисенче ĕçлекен вуншар, çĕршер пин талантлă çынсене кăларчĕç, малашне те кăларса пыраççĕ.

Ленин „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле“ статйăна çырнă чухне çак талантсем вăранма, чĕре, творчествăла аслă ĕçе туртăнма çеç тытăнвă, социалисăм обществин строителствине хăйсем теллĕн тума тытăннă. Халĕ, çак социалисăм обществине Сталин йулташ йертсе пынипе туса хунă ĕнтĕ. Халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе илнĕ, Сталинла Конституци çине çырса хунă пит те пысăк çитĕнÿсене хамăр куратпăр. Социалисăмла хăватлă державă вăл хăй мĕн тума пултарнине пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕ: хуçалăхăн капиталисăмла системине, çынна çын експлоатацилессине ĕмĕрлĕхех пĕтерчĕ. Совет Сойузĕ ÿсет те тĕрекленет. Капиталисăмла çĕршывсем хăйсен халăхсене шутсăр пысăк йăвăрлăх паракан çĕнĕ тата хайар кризиса кĕреççĕ.

Социалисăмла тăван çĕршывра ĕççыннисем тахçанах кризис çинчен те, ĕççĕрлĕх çинчен те маннă. Вĕсемшĕн ĕç хисеплĕх ĕçĕ, чыслăх, мухтавлă ĕçĕ, паттăрлăх ĕçĕ пулса тăчĕ. Вĕсем хăйсен маçтăрлăхне пысăк хаваслăхпа малала йарса пыраççĕ, вĕсем хăйсемшĕн ĕçлени, социалисăмла пуйанлăха нумайлатни ĕççыннисен интересĕсемпе тачă çыхăннине ăнланса, ĕçтухăçлăхне ÿстереççĕ. Ленин пуçарнипе пĕтĕм государствă масштабĕпе организациленĕ социалисăмла ăмăрту халĕ фабриксенче, заводсенче, шахтăсенче, колхозсемпе совхоз уйхирĕсенче, хуçалăхăн пур участкисенче те хăйĕн малтанхи çимĕçĕсене парать. Мĕлйуншар çынсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ, ăмăрту, социалисăмла системăра ĕçе хăйулăн пуçарни халăх ырлăхĕшĕн тÿрĕ тата ырă кăмăлпа ĕçлекен кашни рабочине, колхозникe, интеллигента хăйĕн пултарулăхĕпе талантне ÿстерсе пыма май панине ăнланса ĕçлеççĕ.

Партипе правителствă пĕрремĕш пйатилеткă планĕн программине çинчен пĕлтерни—социалисăмла ăмăртун вăйлă хумне çекленине епĕр пурте астăватпăр. Ăмăрту тата вăл тунă социалисăмла ĕçĕн çĕнĕ форми—ударлă ĕç çĕршыва индустрилесси çинчен Сталин йулташ кăларса тăратнă лозунга, Магнитострой, Кузнецстрой, Сталинградрипе Харьковри трактор заводĕсем, Молотов йачĕпе тăракан автозавод пек пысăк гигантсене тăвас ĕçре пит те пысăк вырăн тытса тăнă.

Социалисăмла ăмăрту, Ленин—Сталин парти йертсе пынипе, пĕрремĕш пйатилеткă планне срукчен тултарнă рабочи класăн пĕрлĕхлĕ вăйне кăтартрĕ. Ку вăл ăмăртса ĕçлекенсемпе ударниксен шучĕ пĕрмайах ÿссе пынинчен лайăх курăнать. 1930 çул вĕçĕнче промышленнăçра ĕçлекен рабочисенчен 48 проценчĕ ударниксем пулнă, 1932 çул тĕлне ку хисеп 64,2 процента çитиччен ÿсне. Пĕрремĕш пйатилеткăн пит те паха ĕçĕсен итогне туса, Сталин йулташ каланă:

„Пире нимĕне пăхмасăрах, çак историлĕ çĕнтерÿ тума май панă тĕп вăйсем ăçта ха вĕсем?“

Вăл, чи малтан рабочисемпе колхозниксен, инженерсемпе техниксен масси пĕрле социалисăмла ăмăртупа ударлă ĕçе сарса пырас тĕлĕшпе çав тери хăватлăн ĕçлесе пынă мĕлйунлă массăсен хастарлăхĕнче, вĕсем нимĕн умĕнче те чаранса тăманнинче, вĕсен хурçăлăхĕнче. Çак условисемсĕр епĕр тĕллев патне çитме пултарайманвăн, малала епĕр пĕр утăм та тума пултарайманни çинчен иккеленмели çук“.

Социалисăм çитĕнĕвĕсемпе пĕрле Совет çĕршывĕн çĕнĕ çыннисем, малта тăракан техникăна алла илнĕ çынсем ÿсрĕç. Сталинла пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсен тапхăрĕсенче строителствă ĕçĕ гигантла сарăлса кайнипе хавхаланса, çĕршер пин рабочисем, инженерсем, техниксем социалисăмла производствăра малта пыраканçем, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн кĕрешекенсем пулчĕç.

Партипе пĕтĕм ĕççыннисен çулпуçĕ Сталин йулташ историлĕ лозунг: „Кадрсем пурне те татса параççĕ“, „техникă, техникăна алла илнĕ çынсемпе тĕленмеле ĕçсем пама пултарать, пама тивĕçлĕ те“ лозунга кăларса тăратрĕ. Халăхсен çулпуçĕн çак историлĕ лозунгне ответлени—социалисăмла ăмăрту çĕнĕрен хăватлă сарăлни, вăл çÿлĕ пусăма хăпарни пулчĕ.

1935 çулти августăн 31-мĕшĕнче каçхине Алексей Стахановăн отбойнăй мăлатукĕ çапни социалисăмла хуçалăхра çĕнĕ тапхăр пуçланса кайнине пĕлтерчĕ. Стаханов хыççăн, тĕрлĕ предприйатисенче ĕçлекен вуншар, кайран çĕршер тата пиншер рабочи ĕçтухăçлăхĕн бољшевикла тĕслĕхне кăтартрĕç.

Бољшевиксен парти стахановла йухăма питĕ пысăк хакларĕ. Стахановецсен Пĕтĕм Сойузри 1-мĕш канашлăвĕнче Сталин йулташ каларĕ: „Паллă мар-им вара, стахановецсем пирĕн промышленнăçра новатăрсем пулса тăни, стахановла йухăм пирĕн индустрийĕн малашлăхĕ пулса тăни, унăн ăшĕнче рабочи класăн пулас културăлă-техникăлă çĕкленÿн пĕрчисем пурри, вăл пире çавăн пек çул: çав çулпа пырсан кăна социалисăмран коммунисăма куçма тата ăс-пуç ĕçлевĕпе ал-ура вăйĕн ĕçлевĕ хушшинчи хирĕçлĕхе пĕтерсе хума кирлĕ ĕçтухăçлăхĕн çÿлĕ висине çитме пултармала çул уçса пани?“

Стахановла йухăма пур çĕрте те анлăн сармала — çапла пулнă ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1935 çулти декабĕрти пленумĕн кăтартăвĕ.

Унтан вара икĕ çул иртрĕ. Социалисăмла ăмăртун çак çĕнĕ тата çÿлĕ форми пурнăçлă пулни сталинла иккĕмĕш пйатилеткăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе çĕршыв тунă çитĕнÿвĕнче лайăх курăнать.

Стахановецсен çарĕ кашни кун ÿсет.

Акă хăшпĕр примерсем: Мускаври Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводра 1935 çулти кĕркунне икĕ стахановец çеç пулнă. Халĕ вĕсем темиçе çĕр. Л. М. Каганович йачĕпе тăракан „Шарикоподшипник“ заводĕнче 1937 çулти йанварĕн 1-мĕшне 3130 стахановец пулнă, декабĕрĕн 1-мĕшнĕ 5.450 стахановец. Хура металлургинче ĕçлекен рабочисен профсойузĕ тăрăх 1937 çулти ийулĕн 1-мĕшĕ тĕлне стахановецсем 85.000 çын; октйабĕрĕн 1-мĕше тĕлне 93.000 стахановец пулнă. Йăвăр промышленнăçăн Уралпа Çĕпĕрти строителствăсенчи строител-рабочисем хушшинче 1937 çулти ийулĕн 1-мĕшне 20.000, октйабĕрĕн 1-мĕшне 26 000 стахановец шутланнă. Йалхуçалăх машинĕсем тăвакан рабочисем хушшинче 1937 çулти ийулĕн 1-мĕшне 18.000, октйабĕрĕн 1-мĕшне 24.000 стахановец пулнă. 1936 çулти сентйабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1937 çулти ийулĕн 1-мĕшне çитиччен центăрти чукунçулсем çинче ĕçлекен стахановец-кривоносовецсен çарĕ 40 процент нумайланнă.

Стахановла йухăм икĕ çул тултарни—социалисăмла ĕçтухăçлăхĕн, Октйаберти Аслă Социалисăмла револђуцин 20 çулхи уйавне, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли историлĕ куна халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илес кĕрешÿ рабочисемпе служăшчисен çĕнĕ мĕлйунĕсене хутшăнтарнипе паллă пулчĕ.

Фрезеровщик Иван Иванович Гудов, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ 1937 çулти декабĕрĕн 23-мĕшĕнче нормăна 9.050 процент тултарса рекорд туни пĕтĕм çĕршыва паллă. Иван Гудовăн çитĕнĕвĕн çекречĕ вăл—станок ĕçĕнче хăйулăнах рационализаторла ĕçсем туниче, Гудов ĕçĕнче тимлĕх, дисциплинă, пысăк културă пуçпулса тăни пулать. Çак паллă стахановецăн примерĕнче епĕр Владимĕр Илйич хăйĕн „Ăмăртăва мĕнле организацилемеле“ статйинче çырнă сăмахсем мĕн пек тĕрĕс пулнине тата тепĕр хут куратпăр. Вăл çапла çырнă“.

„Халăхран“, рабочисенчен, ĕçхресченĕсенчен тухнă практик—организаторсен пулăшĕвсĕр тата вĕсен йертсе пырас ролĕсĕр нийепле те пулма çук.“

Çакнашкал практиксем-организаторсем çĕршывра пиншер, вуншар пин пур. Пирĕн аслă тăван çĕршывăн пĕр хĕрринчен тепĕр хĕррине çитиччен ĕçĕн çакнашкал геройĕсем çинчен мухтав кĕрлет. Анчах та нормăна пиншер процент тултарнинне çеç стахановла ĕç

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Завод начар ĕçлени руководителсенчен килнĕ

ПĂРАЧКАВ. Долгопольăнări химзавочĕ 1937 çулта ытти çулхисенчен начар ĕçлерĕ. Вăл 1 825.600 тенкĕлĕх продукци туса кăларса, çулталăкри плана пĕтĕмпе те 67 процент çеç тултарчĕ.

Ĕç тухăçлăхне хăпартассипе, тавар хакне йунетессипе тата туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатассипе те завод çителĕксĕр ĕçленĕ. Ăна акă çакă цифăрсем те аван кăтартса параççĕ. План тăрăх, пĕр тоннă супăнь туса кăларма 800 тенкĕ тăмала, вăл завода 857 тенкĕ те 72 пуса ларнă. Скипидар—1600 тенкĕ вырăнне 1715 тенкĕ те 44 пуса ларнă. Çавăн чухне 1936 çулта пĕр кубла метр осмол ан вăтам шутпа 85,7 килограм супăнь, 9,1 килограм скипидар туса илнĕ пулсан, 1937 çулта супăнь 84,3 килограм, скипидар—8,8 килограм çеç тухнă.

Йĕртсе пыракансем ĕçшĕн чĕререн çунса ĕçлемен. Весен ĕç меслечĕ—кабинетра ларасси. Çавăнпа халĕ те весем, 1937 çулта завод начар ĕçленине хăйсен айăпĕсем вырăнне шутламаççĕ, тĕрлĕ сăлтавсем те сирсе йама пăхаççĕ.

Планпа пăхнă тăрăх, 1937 çулта заводăн 313 кун ĕçлемеле пулнă. 235 кун çеç ĕçленĕ. Ытти 78 кунĕ планпа пăхман ĕçсем çинех администраци айăпĕпе кайнă. Сăмахран: завод ремонтсем тăвас ĕçе планпа 9.984 аппарат-сехет вырăнне 30.478 сехет уса курнă, простой 17.975 сехет пулнă.

Кам çине йăвантарма йурăт çак ĕçлемесĕр иртерне вăхăтсене? Паллах, администраци айăплă. Завод директорĕ Макаров простойсемпе аварипулассине хирĕç кĕрешес вырăнне, ăна вăрахлатса пынă. Дисциплинăна çирĕп ура çине лартман. Рабочисем производствăра ĕçленĕ вăхăтрах çывăрнă, ÿсĕр пуçпах ĕçе тухнă. Прогульщиксемпе те кĕрешмен.

Завод инженерĕ Маркович йанварпе февраль уйăхĕсенче йуриех шăннă осмол тăратнă. Унăн айăпĕпех нойабĕр уйăхĕнче завод 10 пин тенкĕлĕх убыткă курнă. Супăнь скипидар пахалăхĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе технологилĕ процессене йĕркелемен. Кунсăр пуçне тата остойниксем çинчен кĕлтăрри йанипе 100 пичке ытла супăнь шывпа йухнă.

Тăшманла ирсĕр ĕçсем ытти участăксенче те пулнă. Скипидара ăçта кирлĕ унта ăçатнă. Лабораторин заведуйушчийĕ Буйанов, рабочисен сывлăхне вачарлатас çул çинче пынă Буйанов шурăвардеец 1917—18 çулсенче Хĕрлĕ çара хирĕç тăнă.

Халĕ ĕнтĕ Долгопольăнări завод мĕншĕн начар ĕçлени паллă. Кунта стахановла йухăм сарса пыман, ăна хĕстерсе пусарса пынă. Чи лайăх стахановецсен опычĕсене палăртман. Весене условисем тăваман. Материалсем çитмен пирки рабочисем ахаль тăрса вăхăта иртернĕ. Социалисăмла ăмăртăва сарса пыман.

Культмассăлă ĕç те сÿнсе ларнă. Профсойуз организацийĕ ку ыйтупа отвеглăха туйман. Рабочисем хушшинче каласусемпе пухусем вăхăтран вăхăта çеç туса иртернĕ. Хватерсенче ĕçлессине пачах маннă. Çулталăк хушшинче пĕтĕмпе те 10 картинăран ытла кино кăтартман, йулашки 4—5 уйăх хушшинче пĕр спектакль те пулман. Кружоксем ĕçлемеççĕ. Рабочисем валли çыраннă хаçат-журналсем ăçта килчĕ унта сапаланса выртаççĕ. Хĕрлĕ кĕтеспе клуб час-часах хупă лараççĕ.

Заводăн 1938 çулта пысăк çĕкленÿпе ĕçлемеле. Заводăн плана ăнăçлăн тултарса пыма кирлĕ условисем çителеклĕ.

Завода кĕрсе вырнаçнă сăтăрла елементсене тĕпĕ-йĕрĕпех тасатни кирлĕ.

Михайлов.

Йăл трахомран тасалать

Икĕ çул каййарах Катăш йалĕнче (Йĕтĕрне р.) трахом чирĕпе чирленисен шучĕ 170 çынна йахăн пулнă.

Йалсовет çумĕнчи культсекци трахом чирĕпе кĕрешес ĕçе 1936 çулта тытăнчĕ, йалта трахомпункт уçрĕç.

А. Василйева трахсестра трахом ĕçхалăхĕн тăшманĕ пулни çинчен халăха ăнлантарчĕ, вĕрентрĕ. Пурт-çуртсене мĕнле тытнине пăхса, ситменлĕхсене вырăнта пĕтерме тăрăшрĕ.

Василйева тăрăшса ĕçлени ахаль пулмарĕ. Пăйанхи куна йалти 159 хуçалăхран 140-шĕнче уйрăм алшăлли усă кураççĕ, уйрăм çытарминтер çинче выртса тăраççĕ. Çĕнĕрен мунчасем лартаççĕ, кашни ернере 1—2 хут урайсене çăваççĕ. Василйева йулташ трахпункта çÿрейменнисен килĕсене те çÿрет. Çавăн пек ĕçленипе 170 трахомлă çынран 130 çынна сыватнă та ĕнтĕ.

Ф. Кольцов.

Литературă вечерĕ туса иртерчĕç

Ураковори (Сĕнтĕрвăрри районĕ) туллимар вăтам шкулта 1937 çулхи февраль уйăхĕнче литкружок организациленĕ. Литкружокра 43 çын тăрать. Литкружока йĕртсе пыракан Незорова йулташ кружок членĕсене кĕркуннерен пе А. С. Пушкин тата Н. Островский пурнăçĕсемпе ĕçĕсем çинчен ăнлантарса пынă.

Халь тата Николай Алексеевич Некрасов вилни 60 çул тултарнă кун шкулта литература вечерĕ турĕç. Вечерта Незорова йулташ поет пурнăçĕ çинчен каласа кăтартрĕ. Литкружок членĕсем Некрасовăн „Чукунçул", „Кому на Руси жить хорошо" поемисене каласа пачĕç.

Вечер савăнăçлăн иртнĕ. Çамрăксем çакăн пек литература вечерĕсене час-часах туса тăма ыйтаççĕ.

В. В.

Йанварĕн 9-мешĕнче. Лондонра пĕтĕм тĕнчери чи малтанхи метрополитена уçнăранпа 75 çул тулчĕ. 1863 çулта Лондонра ахаль паровозпа ĕçлекен малтанхи çĕр айĕнчи пойăса ĕçе йанинчен пуçласа Совет рабочийĕсемпе инженерĕсем чи кĕске срукра туса пĕтерне Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан тĕнчери чи лайăх метрона çитиччен иртнĕ çул питĕ интересла.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сулахайра Лондонри Метро станцийĕ (1863 ç.), сылтăмра Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан метрон „Кийевски" станцийĕ (1937 ç.).

(Сойузфото).

Совет Сойузĕ тăрăх

★ Совет Сойузĕн кăмрăк промышленнăçĕ питĕ пысăк çĕнĕ шахтăпа пуйанланнă. Правителства Комиççийĕ Донбассра Несветайантрацит тресчĕн 5-мĕш №-лĕ пысăк шахтине йышăннă. Вăл шахтă çулталăкра 1. 150 пин тоннă кăмрăк памала.

★ Чукунçул транспорчĕн Аслăлăхпа тĕпчев институчĕ кăмрăка паровоз ăшĕнчех вĕтетмели установкă-арман туса хатĕрленĕ, çав тусан пек вĕтĕ кăмрăкпа паровоз кăмакине хутаççĕ. Локомотивсене тусан пек вĕтĕ кăмрăк çунтарса чуптарма пуçлани кăмрăк пĕтессине 20 процент чакарĕ. Паровозсене хутса çунтарнă çĕрте сахал каллорилĕ кăмрăксем лайăх чĕрĕлме пултараççĕ.

★ Орйол облăçĕнчи Севск районĕнчи „Первый шаг к коммунизму" колхоз 1937 çулта 1.300.000 пин тенкĕ укçан тупăш илнĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 10-шар тенкĕ панă. Баландин колхозникăн семйи 1.300 ĕçкунĕ ĕçлесе 13 пин тенкĕ илнĕ.

★ ССР Сойузĕн Аслăлăхсен Академийĕн литература институчĕ тăвату том „Вырăс литературин историйĕ", виçĕ том „Хĕвеланăçри литературăсен историйĕ", çавнашкалах тата классиксен пĕтĕм сочиненийĕсен аслăлăхлă изданисене пичетлеме хатĕрленет.

★ Киргиз СС Республикĕ кăçал шкулсем тумă 30 мĕлйун тенкĕ укçа хывнă, вăл иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах пулать.

★ Ленинградра чукунçул çинче ĕçлекенсен чи пысăк поликлиникине туса пĕтернĕ. Вăл поликлиникăра тĕрлĕрен сывалмали пÿлĕмсем 400 ытла. Поликлиникă пĕр кун хушшинче пилĕк пин çынна пăхса йама пултарать.

Йарославль облăçĕнчи Больше сольский район йатне улăштарса Некрасовский район тунă

Вырăссен паллă поечĕ Николай Алексейевич Некрасов вилни 60 çул çитнĕ май, Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Йарославль облăçĕнчи Большесольский район йатне улăштарса Некрасовский районĕ тума, унăн центрне,—Большие Соли салине, Некрасовский сали йатлă тума тата çав районри Грешнево йалне Некрасово йалĕ йатлă тума йышăннă.

(ТАСС).

Й. М. Свердлов сылкăра пурăннă çурт

НОВОСИБИРСК, йанварĕн 7-ш. (ТАСС). Колпашенск районĕнчи Максимкин Йар йатлă йалта (Нарым) пысăках мар çурт ларать, унта патша сылки вăхăтĕнче Йаков Михайлович Свердлов пурăннă. Партин округри комитечĕпе округ ĕçтăвкомĕ вăл çурта çĕнетме шутланă. Вăл çурт йĕри-тавра музейпа библиотекă тăваççĕ. Çапла вара çурт музей ăшĕнче шалта пулать. Çурта çĕнетмели тата музей тумали пройекта çирĕплетнĕ ĕнтĕ.

Йолкă туса иртерчĕç

ВĂРНАР. Йанварĕн 5-мĕшĕнче фосфорит заводĕнче çĕнĕ çул йачĕпе йолкă туса иртерчĕç. Йолкă курма 600 çын ытла пухăнчĕç.

Н. К.

ХРОНИКА

◆◆ ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ К. И. Бутенко йулташа йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

◆◆ ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ П. В. Кузьмин йулташа йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

◆◆ ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ М. Г. Первухин йулташа йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

◆◆ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. В. Саутин йулташа ССР Сойузĕн Государствă план комиççи çумĕнчи халăх хуçалăх учĕчĕн Тĕп Управлени начальникĕ лартнă.

◆◆ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Г. Н. Мишнайевский йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи заготовкăсен Комитечĕн председател заместителĕнчен хăтарнă.

★ ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ С. Б. Жуковский йулташа ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

★ ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ П. И. Паршин йулташа Машиностройени Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Тĕне хирĕçле вечерсемпе лекцисем

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри колхозсенче пупсемпе кулаксен праçникне—сурхурине хирĕçле вечерсем туса иртерне. Йанварĕн 6-мĕшĕнче Пĕчĕк Хырти „Правда" колхозра пулнă вечерти çамрăксене ПСÇЛКС райкомĕн пропагандисĕ—политвĕревÿ пайĕн пуçлăхĕ Гвоздков йулташ „Тĕне хирĕçле пропагандăпа совет çамрăкĕсен задачисем" йатлă темăпа, Амачкинăри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозра Сĕнтĕрвăрри хулинчи тухтăр Агельский йулташ „Тĕн тата медицинă" темăпа, колхоз председателĕ Костров йулташ „Тĕн тата вăйла тырпул" темăпа лекцисем вуланă. Судоверфри рабочисем хушшинче тухтăр Виноградов йулташ „Тĕн тата медицинă" темăпа доклад тунă. Йанварĕн 7-мĕшĕнче Хуракассинче, Шĕнерпуçĕнче тĕне хирĕçле вечерсем пулнă.

Промертелсенче ĕçлеме

Йанварĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта, Чăвашвăрманпромхоз системине кĕрекен промертелсене йĕртсе пырас ĕçри работниксем хатĕрлеме 3 уйăхлăх курс уçăлчĕ. Халь курсра 14 çын вĕренет. Вĕренсе тухсан вĕсем пурте промертел правлени председателĕсен заместителĕсем пулса ĕçлеме кайаççĕ.

КАШКĂР ТЫТНĂ

Çак кунсенче Мăн Йавăшри (Вăрнар р.) ухатник Арсентйев йулташ уйра мулкачăсем тытма кайнă. Мулкач хыççăн йĕрлесе пынă чух вăл пĕр çырма хĕрне çитсĕн, çырма тĕпĕнче икĕ кашкăр выртнине курнă. Вара Арсентйев кашкăрсене пăшалпа пенĕ. Пĕр кашкăрĕ вилнĕ, тепри тарнă.

Хула совечĕсем çумĕнчи вырăнти промышленнăс тата коммуналă хуçалăх пайĕсем

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ 1938 çулхи йанварĕн 5-мĕшĕнче Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе пĕрле пулнă ларăвĕнче Чăваш АССР Конституцин 63 мĕш статйи тăрăх, хула совечĕсем çумĕнче вырăнти промышленнăç тата коммуналă хуçалăх пайĕсем тăвасси çинчен постановлени йышăннă.

Вырăнти промышленнăç пайĕсем Улатăр тата Шупашкар хула совечĕсем çумĕнче пулаççĕ.

Комуналă хуçалăх пайĕсем Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ тата Йĕтĕрне хула совечĕсем çумĕнче пулаççĕ.

Хоккей

Йĕтĕрне—Шупашкар 1:2

Йанварĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта „Спартак" обществин катокĕ çинче Йĕтĕрне хулинчи хоккей командипе Шупашкарти „Спартак" команди тĕл пулса вылйарĕç.

Вăйă Шупашкарти „Спартак" команди çĕнтернипе пĕтрĕ. Шупашкарсем Йĕтĕрне алăкне икĕ мечкă çапса кÿртрĕç, Йĕтĕрнесем пĕрре çеç кÿртрĕç. Шупашкарсен пуринчен ытла сылтăм йĕнчен выракан К. Бурцев аван вылйарĕ. Икĕ меч кине те вăлах çапса кÿртрĕ.

Ф. Каратайев.

СУД

Йалпори тăшмансем

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Хĕрлĕ Чутайри йалпора тăшмансем йăва çавăрнă, вĕсем чылай вăхăт хушши коппературатива çаратса пурăннă. Чăвашсойуз инструкторĕ Степанов йалпо председателĕпе пĕрле йаланах ĕçсе çÿренĕ. Магазин директорĕ Можайкин 20 пин тенкĕ растратă тунă. Васков бухгалтер бухгалтери ĕçне йалтах аркатса йанă.

Çак сăтăрçăсем йалпона йурийех колхоз иксене кирлĕ мар таварсем илсе килсе тултарнă, çав вăхăтрах кайакан таварсене сутмасăр пытарса усраса çĕртсе йанă. Тăшмансем çакăн пек меслетсемпе ĕçлесе колхозниксене кооперацинчен сивĕтесшĕн пулнă

Тăшмансене тытса тăрă шыв çине сĕтерсе кăларчĕç. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи халăх сучĕ Степанова 3 çуллăха, Можайкина 4 çуллăха, Васкова 4 çуллăха хупса усрамала приговор йышăнчĕ. Суд курма пынă халăх суд решенине хапăл туса ырларĕ.

Е. Самарин.

Техникумри физкультура ĕçĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнчи студентсем физкультурăпа çар ĕçне йуратса вĕренеççĕ.

Техникумра физкультура командисем организациленĕ.

Халĕ студентсем „ГСО" значокĕн нормине пама хатĕрленеççĕ. Кун пирки техникум врачĕ Дубов йулташ 3 хутчен заньати туса иртернĕ. Техникумăн 35 мăшăр йĕлтĕр, 35 мăшăр коньки пур.

Г. Смирнов.

Пулни-иртнисем

ÿСĔРЕ ПУЛА. Йанварĕн 3-мĕшĕнче Çĕрĕç халăх комиссариачĕн племзаготконторă уполномоченнăйĕ Михаил Борисович Борисов Шупашкарти американкăна кĕрсе ерех сара ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ. ÿсĕр вăхăтра пĕр паллă мар çын Борисовăн портфелне вăрласа кайнă. Портфелте 100 пин тенкĕ укçа илмели хаклă документсем пулнă.

Ответлă редактор заместителĕ

И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Социалисăмла ăмăрту ĕçре

(Йулашки)

тесе шутлани тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Талантлă тата паллă стахановецсен пысăк рекорчĕсене пур майсемпе сарса пынă чухне, хăйсен пит те лайăх ĕçĕсемпе пирĕн промышленнăçа малала йаракан стахановецсем тĕп масси çинчен манма йурамасть. Вĕсене ÿсме, вĕсен ĕçтухăçлăхне тата пысăкăн ÿстерме услови туса памала. Стахановла йухăма малала вăйлатса пырас ĕçре „Мускав тата Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановецсем чĕнсе каланă пирки" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановлени питĕ те пысăк вырăнта тăрать. ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленийĕ чи кирлĕ задачисенчен пĕри—стахановецсен ретне йышлатасси пулать тесе шутлать.

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв хамăрăн кăмрăк кăларакансем вăйхала хурса ĕçленине сăнаса тăрать. Сталинла Нарком Л. М. Каганович йулташ йĕртсе пынипе Донбас малала карĕ. Шахтăсенчи стахановецсемпе ударниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне плана пит те паха тултарнипе паллă турĕç.

Йывăр промышленнăç халăх комиссариачĕ тата ытти комиссариатсем профсойузсен тĕп комитечĕсемпе пĕрле тунă куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава илессишĕн çĕршер, пиншер предприйати ăмăртса ĕçлеççĕ, мала тухасшăн кĕрешеççĕ.

Стахановецсем ĕçтухăçлăхне ÿстермели майсем пысăккине кăтартаççĕ. Хуçайственниксемпе инженерсен тата техниксен ĕçĕ производствăна организацилесси, стахановла йухăма йĕртсе пырасси пулать.

Массăлăх—акă мĕнре стахановла йухăмăн вăйĕ. Паллах, рекордсем пит те пысăк вырăнта тăраççĕ. Анчах рекордсемпе çеç ĕçлесе массăлă стахановла йухăма манса хăварни пирĕн строителства çийен тунине вĕлтерет. Стахановецсемпе ударниксен пĕтĕм çарне пулăшмала, йĕртсе пымала.

Социалисăмла ĕçтухăçлăхне малашне хăпартас ĕçре профсойузсен задачĕсем пит те ответлă. Коммунисăмшăн кĕрешес ĕçре совет профсойузĕсем Ленин—Сталин партин сывăх помошникĕсем пулнă, пулаççĕ те. Халăхăн ылханлă тăшманĕсем, троцкисла-бухаринла бандитсем профсойузсене партирен уйăрма хăтланнă, вĕсене шалтан аркатма хăтланнă. Томски шайки профсойузсенче контрреволюцилĕ тредйунионисăм вырнаçтарнă, профсойузсене ĕçтухăçлăхне хăпартассишĕн, социалисăмла державăна çирĕплетессишĕн, хамăр тăван çĕршыва капиталисăмла çĕршывсене пăхăнмала мар тăвассишĕн кĕрешессине хирĕç пулнă. Фашисăмăн усал агенчĕсем—троцкисла-бухаринла бандитсем, шпионсемпе диверсантсем стахановла йухăма пĕтерессишĕн пулнă, вĕсем ку тĕлĕшпе лайăх стахановецсене вĕлерессе умĕнче те чарăнса тăман. Ленин—Сталин партийĕ йĕртсе пынипе тăшмансен ĕçне, ĕмĕтне çапса аркатнă.

Ку таранччен тупса палăртман тред-йунионисăма вĕçне çитиччен тăпăлтармала. Тред-йунионисăм вăл профсойуз работникĕсем нумайĕшĕ социалисăмла ăмăртăва тата производствăлă канашлусене йĕртсе пырассинчен хăйсене хăйсем пăрăннинче йар уççăн палăрнă. „Çав вăхăтрах ĕç çине социалисăмла вĕренессипе ĕçтухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешесси профсойузсен тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать". Профсойузсен Тĕп Совечĕн IV-мĕш пленумĕн çак кăтартăвĕ профсойузсен производствăлă массăлă ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетме хушать. Çакна тума пур майсем те çителĕклĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлав кампани мĕлйуншар ĕççыннисен производствăлă хастарлăхне çĕнĕрен çĕклерĕ. Ленинла социалисăмла ăмăртун идейи пирĕн халăх хуçалăхĕн пур пайĕсене те кĕрсе вырнаçать. Ударниксемпе стахановецсен çарĕ, сталинла саманари чаплă çынсен çарĕ пĕрмайах ÿсет, Ленин: „рабочи класпа хресченсем хушшинче талант пуçламан çăлкуç тата пуйанран та пуйан çăлкуç" тесе çырнин тĕрĕслĕхе пĕтĕм пысăкăшĕпе тухса тăрать. Ленин—Сталин парти тăрăшнипе хавхаланнă совет çĕршывĕнчи халăхсем тăванла ăмăртнипе коммунисăмăн пысăкран та пысăк çĕнтерĕвĕсем патне шанчăклăн утаççĕ.

1937 çулхи декаберĕн 29 мĕшĕнече иаçхине

Шăмăш йалсоветĕнчи БУДЕННЫЙ йачĕпе тăракан колхозра (Шупашкар р.)

ЛАША ТЫТНĂ

сарă теслĕ, икĕ хăлхи те çурăк, 12 çулта.

Чăвашснабосоавиахим складĕнче

ТĔРЛĔРЕН ВИÇЕЛĔ

ЙĔЛТĔРСЕМ СУТЛĂХ

ПУР

Тÿрех укçа тÿлесе илме пулать, çавнашкалах перечислени тăрăх та параççĕ.

Расчет счечĕ № 1291 Гособанкăн Чăваш кантурĕнче.

АДРЕС: Шупашкар, Плеханов урамĕ, 31 Чăвашснабосоавиахим.

Академи театрĕнче

Йанварĕн 10-мĕшĕнче Вырăсла спектакль

ЛАВРЕНЕВ ПРЕМЙЕРА

„Разлом"

(4 пайлă)

С. С. Мартагин режиççор лартать.

Талон №-78. Абонемент №-5. Талон №11

Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ ертелĕнче

Пушар пулнă пирки учрежденисен тата уйрăм çынсен претензисем пур пулсан, вĕсене çак пĕлтерÿ тухнă хыççăн икĕ ерне хушшинче парса пĕтермеле. Икĕ ерне иртсен кайран нимĕнле претензи те йышăнмаççĕ.

Ертел кантурĕ халь Коммуналă çĕнĕ мунчара вырнаçать, картищĕнчен кĕрсе çÿремеле.

Правлени.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ФИНАНС ПАЙĔ

пур граждăнсене те çакна пĕлтерет: аласталăхпа ремесла промыслисене регистрацилес правилăн 1-мĕш § тăрăх, аластапа ремесла промыслипе тата туртарас ĕçпе пурăнкан пур граждăнсем те хулари финанс пайĕнче халех 1938 çулшăн регистрацилĕ удостоверени илмеле.

Регистрацилĕ удостоверени илменшĕн айăплă çынсем çине 500 тенкĕ çити штраф хураççĕ.

Хулари финанс пайĕ.

Шупашкарти саслă кинотеатртa

Саслă илемлĕ çак фильмсене кăтартаççĕ:

АЧАСЕМ ВАЛЛИ

Йанварĕн 10-11-мĕшĕнче

ЧАПАЕВ

Йанварĕн 12-мĕшĕнче

„Дума про козака Голоту"

Сеанссем кăнтăрла 12 сехетре тата 2 сехетре пуçланаççĕ.

Кассă ирхине 10 сехетрен уçă.

ÇИТĔННИСЕМ ВАЛЛИ

Йанварĕн 10-мĕшĕнче

„КРЫЛАТЫЙ МАЛЯР"

Кун хыççăн

„Мы будем лейтенантами флота"

киножурнал кăтартаççĕ.

Йанварĕн 11-12-мĕшĕсенче

„Поколение победителей"

Йанварĕн 13-мĕшĕнчен

çĕнĕ, илемлĕ, саслă фильм кăтартма тытăнаççĕ:

„КАДЖЕТИ"

Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре" йатлă поемă тăрăх ÿкĕрнĕ фильм.

Кун хыççăн киножурналсем:

„День в Батуме"

„Пройдоха"

Сеанссем 6, 7 сех. 40 м. тата 9 сехет те 20 м. пуçланаççĕ.

Кассă 2 сехетрен уçă.

Горьковская комиссия по протезированнию будет работать в ЧАССР:

1) в гор. Канаше 14 января и 9 февраля 1938 г.

2) в гор. Чебоксарах 16—17 января и 11—12 февраля 1938 г.

Предлагается нуждающимся инвалидам явиться в указанные сроки.

Наркомсобес ЧАССР.

Горькири протез комиççийĕ Чăваш АСС Республикинче ÇАК КУНСЕНЧЕ ĔÇЛЕТ

1. Канашра 1938 ç. йанварĕн 14-мĕшĕнче тата февралĕн 9 мĕшĕнче.

2. Шупашкарта 1938 ç. йанварĕн 16—17-мĕшĕнче тата февралĕн 11—12-мĕшĕнче

Протезсем тутарас текен инвалидсен асăннă сроксенче пымала.

Чăваш АССР Социаллă пулăшу халăх комиссариачĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 27-мĕшĕнче çĕрле

Лаша тарнă

Тĕсĕ сарă-çÿрен, çилхи сылтăм йенеле, çÿлĕш 131 сант.

Çак адрĕспе пĕлтермеле: Сĕнтĕрвăрри районĕ, „Хастар" колхоза.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса [illegible] кансем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус. 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 818. полиграфтреста, Заказ № 2601 Тираж полиграфтреста Заказ № 2370 Тираж 13964 58—92 см. 1—1 п. л.